Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
НОЙАБĔР
3
КĔÇНЕРНИКУН
254 (5067) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать   ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ   Пĕр №-ре 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактăрăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйăн — 6—23.

Йалти куљтурлă-массăлă политикăлă ĕç кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра

Массăлă-политикăлă агитаци ĕçĕ пирĕн революцилĕ йухăмра йалапах пысăк вырăн йышăнса тăнă. Большевикла агитаци, Ленин—Сталин партин чăнлăхла сăмахĕ халăхăн ĕçри хастарлăхне, пултарулăхне, талантне хăватлăн çĕклет.

Верховнăй Советсен иртнĕ суйлав кампанийĕнче пирĕн коммунисла парти малта пыракан рабочисемпе колхозниксенчен, стахановецсемпе ударниксенчен—партири тата партире тăман большевиксенчен, комсомолецсенчен, йала илсен—йалти интеллигенцирен—учителсенчен, врачсенчен, агрономсенчен сахал мар агитатăрсем пăхса çитĕнтерчĕ. Агитаци ĕçĕ суйлав кампанинче çĕнĕ меслетсемпе, çĕнĕ опытпа пуйанланчĕ. Пирĕн совет халăхĕ большевикла сăмаха тулли ырă кăмăлпа кĕтсе илсе йышăнать.

Парторганизацисен, комсомолпа профсойузсен суйлав вăхăтĕнчи агитаци опытне малала пуйанлатса, вăйлантарса пымала. Ĕçре çитĕннĕ большевикла агитатăрсене куллен вĕрентсе, пулăшса пымала. Пирĕн пĕр агитатăра та куçран çухатмала мар.

Анчах суйлав кампани иртнĕренпе массăлă-политикăлă агитаци ĕçĕ кайала чакни, сӳрĕкленни сисĕнет. Кăна пирĕн Чăваш республикĕ государствă умĕнчи обйазателствăсене татас тĕлĕшпе кайа йулса пыни те тӳрремĕнех кăтартса парать.

Парторганизацисем массăлă-политикăлă ĕçе производствăлă-хуçалăхла ыйтусемпе тĕплĕнех çыхăнтарса пыраймаççĕ, агитатăрсемпе çителĕклĕн ĕçлемеççĕ.

Çулахи хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче колхозсенчи бригадăсенче çтена хаçат редактăрĕсем, хаçат вулавçисем, политинформатăрсем ĕçлерĕç. Халĕ, колхозниксем хирти ĕçсенчен пушаннă вăхăтра, пирĕн агитатăрсем хăйсен ĕçне пачах урăхлатса çĕнетмеле, вĕсем ĕççыннисенчен уйăрăлса каймала мар, халăх хушшинче куллен малала ĕçлесе пымала, колхозниксен вăхăтне куљтурлăн организацилемеле.

Халљхи вăхăтра пирĕн редакцине агитаци ĕçне лайăх йĕркелени çинчен мар, агитатăрсем, колхозри клубсемпе вулав çурчĕсем, радио, çтена хаçачĕсем начар ĕçлени çинчен калакан материалсем ытларах килеççĕ.

Вăрнар районĕнче Нурăс йалĕ ытти йалсем хушшинче куљтурă тĕлĕшĕнчен малта таракан йал. Анчах кунта лайăх клубах клуб пуçлăхĕ Быкăв йалан питĕрсе тăрать. Колхозри çтена хаçачĕ тухма пăрахни нумай пулать ĕнтĕ, радио ĕçлемест. Колхозниксем тĕнчери лару-тăру çинчен, тăван çĕршывăн çĕнтерĕвĕсем çинчен пĕлесшĕн, вĕсене ку ыйтусене ăнлантарса парас тĕлĕшпе никам та ĕçлемест. Иртнĕ çулсенче Нурăсра врачсем тĕрлĕрен чир-чĕрсенчен сыхланмали çинчен ĕççыннисене лекцисем вуласа панă, кăçал ку ĕçе те йĕркелемен.

Çакнашкалах Çĕрпӳ районĕнчи Паваркасси йалĕнче те. Кунта вулав çурчĕн пуçлăхĕ И. Андрейĕв вулав çуртне ернере те икĕ хутчен çеç пырса кайать. Андрейĕв йалти актива пĕлмест, комсомол организаципе те çыхăнса ĕçлемест, политикă тĕлĕшĕнчен вăл кайра тăрать, паллах, кунашкал çын ĕççыннисен ыйтăвĕсене татса пама пултараймасть.

Шăхаљ (Шăхасан р.) вулав çуртĕнче вулав çурт пуçлăхĕсем пĕрехмай улшăнса тăраççĕ. Улшăннинчен нимĕн усси те çук, вулав çурт пуçлăхĕсем „кључниксем" вырăнĕнче кăна тăраççĕ.

Вăрнар районĕнчех Кӳлхĕрри вулав çурчĕ валљи çурт уйăрса паман, вулав çуртне йалсовета пĕр кĕтессе вырнаçтарнă, анчах кунта вуламали те, итлемели те нимĕн те çук.

Халĕ кĕркуннехи вăхăтра та пире лайăх ĕçлекен клуб, вулав çурчĕ, хĕрлĕ кĕтес, лайăх агитатăр кирлĕ. Йалти ĕççыннисем халĕ каçсерен клуба, вулав çуртне, библиотекăна пыраççĕ. Вĕсем тĕнчери лару-тăру çинчен, совет правителствин саккунĕсемпе постановленийĕсем çинчен вăхăтра, тĕплĕн, лайăх пĕлесшĕн. Пирĕн агитатăрсем, йалти куљтурлă учрежденисем ĕççынни ыйтнине тӳррĕн çырлахтарса пымала.

Клубсем, вулав çурчĕсем, хĕрлĕ кĕтессем, библиотекăсем кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра уйрăмах лайăх ĕçлемеле, вĕсем çак вăхăтсене валљи конкретлă плансем туса, вĕсене пурнăçа çирĕп кĕртсе пымала. Колхозник клубпа вулав çуртне, хăйĕн тăван килне пынă пек, йуратса, ăшă кăмăлпа пытăр. Кунта вăл хăйне куллен интереслентерекен ыйтусем çине тĕрĕс ответ туптăр, унăн кăмăлĕ çĕклентĕр, тавракурăмĕ сарăлтăр, куçĕ уççăнрах курма пуçлатăр. Пирĕн агитатăрсем ĕççыннисене—йалти колхозниксемпе йединоличниксене хăйсен тавра таччăн пĕтĕçтерсе пымала. Партипе правителствă решенисене, аслă çулпуç Сталин йулташ сăмахĕсемпе шухăшĕсене ĕççыннисем патне вăхăтра тĕрĕс çитермеле.

Клубсен, вулав çурчĕсен, хĕрлĕ кĕтессен, библиотекăсен хăйсен планĕсенче кĕркуннепе хĕллехи вăхăтсенче тумали ĕçсене пĕтĕмĕшпех татăклăн палăртмала. Куљтурлă-массăлă политикăлă ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе парти райкомĕсен район тăрăх плансем тумала. Йалсовечĕсен клубсемпе вулав çурчĕсене халех тĕплĕн йусамала, вĕсене валљи вутă хатĕрлесе хумала.

Парти райкомĕсен, Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе унăн вырăнти органĕсен куљтурлă-массăлă ĕçри кадрсене хатĕрлес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлемеле, вĕсене куллен тĕрĕс çитĕнтерсе пымала, вĕрентмеле, пулăшмала.

Куљтурлă-массăлă ĕçе хуçалăхри, производствăри ыйтусемпе таччăн çыхăнтарса пымала. Куљтурлă-массăлă политикăлă ĕç стахановецсене, ударниксене малала ӳсме, ĕççыннисене государствă умĕнчи обйазателствăсемпе хуçалăх планĕсене тултарса пыма, уйрăмах халĕ пахча-çимĕç, çĕрулми обйазателствисене тултарма пулăштăр.

Куљтурлă-массăлă политикăлă ĕçре йалти интеллигенци пĕрремĕш вырăн йышăнса тăмала. Врач, агроном, учител ĕççыннисен йалан кĕтсе тăнă агитатăрĕсем пулччăр. Вĕсен лекцийĕсем, вĕсем ирттерекен беседăсем ĕççыннисен куљтурлăхне ӳстерсе пыччăр.

Паллах, тĕне хирĕçле пропагандăна халĕ уйрăмах çӳле çĕклемеле. Халăх тăшманĕсем тĕн сĕрĕмĕпе усă курма пăхнине хирĕç массăлă агитаци ĕçне большевикла хастарлăхпа вăйлатмала.

Нумай çĕрте йалсовечĕсем, колхоз правленийĕсем куљтурлă-массăлă ĕç валљи уйăрнă укçа-тенкĕне урăх çĕреле салатса йараççĕ. Ку йĕркене пĕтермеле. Йалти клуба, вулав çуртне, библиотекăна куллен çĕнĕ материалсемпе, литературăпа пуйанлатса пымала. Йалти библиотекăсем халљхи вăхăтра ĕççыннисене нихăш йĕнчен те çырлахтарса пыраймаççĕ.

Уйрăмах начар тăрать массăлă-политикăлă ĕç йединоличниксем хушшинче. Халљхи вăхăтра ССР Сойуз Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Сессийĕ йышăннă саккунсене ăнлантарса парасси йединоличниксем хушшинчи политикăлă ĕçĕн тĕп никĕсĕ пулса тăмала.

Массăлă-политикăлă ĕçĕн пахалăхне лайăхлатас тесен, пирĕн агитатăрсем, клубсемпе вулав çурт пуçлăхĕсем, политинформатăрсем хăйсен пĕлĕвĕсене куллен хăпартса пымала, вĕсем большевисăмпа çавăрса илмеле, большевикла партин историне тĕплĕн вĕренмеле.

Парти организацийĕсем йалти куљтурлă-массăлă политикăлă ĕçе куллен йертсе, лайăх йĕркелесе пымала, çĕнĕрен-çĕнĕ агитатăрсем пăхса çитĕнтермеле.

Октабĕр революцин 21 çулĕ çывхарнă май большевикла агитаци ĕçне çӳлĕрех çĕклесе, хуçалăхра, производствăра тата пысăкрах çĕнтерӳсем тăвар!

Колхозниксен хĕллехи вĕренĕвĕ

Кăçалхи çул колхозниксене хĕллехи вăхăтра вĕрентесси çине уйрăмăнах хытă пăхаççĕ. Украинăри квалификацине хăпартакан курссенче, колхоз шкулĕсенче социалисăмлă уйхир ударникĕсемпе стахановецсем, бригадирсемпе трактăриссем пĕтĕмпе 600 пин çын ытла вĕренмеле. Хĕл тăршшĕнче пĕтĕмпе 3.800 комбайнер, 16.950 шофер, 18 000 трактăрис хатĕрлемеле. (ТАСС).

ССРС ордĕнĕсемпе, „За отвагу" тата „За боевые заслуги" медаљсемпе наградăлани

Октабĕрĕн 30-мĕшĕнче центрти хаçатсем çинче ССР Сойузĕн Верховнăй Совет Президиумĕ Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн тата чикĕри хуралăн командирĕсемпе начаљникĕсен составне, красноармейĕцсене, командирсемпе начаљниксен составĕн çемйе членĕсене, госпиталсемпе суту-илӳ флочĕн работникĕсене ССР Сойузĕн ордĕнĕсемпе тата медалĕсемпе наградăласси çинчен кăларнă Указăн малалине пичетлесе кăларнă. Хасан кӳлли районне сыхланă вăхăтра çапăçу заданисене кăтартулăн пурнăçа кĕртнĕшĕн, хăйулă та паттăр пулнăшăн 10 çынна Ленин ордĕнĕпе, 500 çынна „Хĕрлĕ Йалав" ордĕнĕпе, 500 çынна „Хĕрлĕ Çăлтăр" ордĕнĕпе, 300 çынна „За отвагу" медаљпе, 190 çынна „За боевые заслуги" медаљпе наградăланă.

Октабĕрĕн 31-мĕшĕнче „Правда" хаçатра ССР Сойузĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕн вĕçне пичетлесе кăларнă. 5 çынна Ленин ордĕнĕпе, 562 çынна „Хĕрлĕ Çăлтăр" ордĕнĕпе, 226 çынна „За отвагу" медаљпе, 169 çынна „За боевые заслуги" медаљпе наградăланă.

Хасан кӳлли районне сыхланă çĕрте çапăçу заданисене кăтартулăн пурнăçа кĕртнĕшĕн, хăйулă та паттăр пулнăшăн ССР Сойузĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх пурĕ 95 çынна Ленин ордĕнĕпе наградăланă, 1.982 çынна—„Хĕрлĕ Йалав" ордĕнĕпе, 1.935 çынна—„Хĕрлĕ Çăлтăр" ордĕнĕпе, 1.325 çынна—„За отвагу" медаљпе тата 1.159 çынна—„За боевые заслуги" медаљпе наградăланă.

(ТАСС).

Аслă праçник умĕн

Совет Сойузĕнчи хуласемпе йалсенче Октаберти Социалисăмлă Аслă революци 21 çул тултарнине уйавласа ирттерме пикенсех хатĕрленеççĕ. Уйав кунĕ тĕлне çĕнĕрен театрсем, шкулсем, пурăнмали çуртсем уçаççĕ, електростанцисене ĕçе йараççĕ.

Чернигăв облăçĕнчи чылай районсенче етемлĕх генийĕн—Владимир Иљйич Ленин памĕтникне уçаççĕ. Нежинскри „Червоный партизан" ертелте пысăк памĕтник лартаççĕ, унăн çӳлĕшĕ 2 метр çурă пулать.

Ракша йалĕнче (Тамбов облăçĕ) оборонă çуртне тата сăслă кинотеатр çуртне хатĕрлесе çитереççĕ, вĕсене нойабĕрĕн 7-мĕшĕнче уçаççĕ.

Житомир облăçĕнчи Новоград-Волынск районĕнче „Перемога" колхоз ĕççыннисен аслă праçникне хатĕрленсе пынă май електростанци лартса çитерет.

(ТАСС).

Чаплă цыфăрсем

Халăх хуçалăх учочĕн Мускав облăçĕнчи управленийĕ рабочисен пурнăçĕ çинчен чаплă цифăрсем пухса пырать. Столицăри промышлĕннăçăн тĕрлĕ пайĕсенче ĕçлекен пин рабочине йахăн кашни уйăхрах хăйсен çемйин бӳджечĕсем çинчен пĕлтерсе тăма кăмăл туса килĕшнĕ.

Çавăн пек çведĕнисене тĕплĕн шута илсе пăхса тухни рабочисен пурнăçĕ пур йенĕпе те йаланах лайăхланса пынине тĕплĕн кăтартса панă. „Серп и молот" савăтри валљцовщик В. йулташ 1932 çулта уйăхра вăтамран 261 тенкĕ ĕçлесе илнĕ пулнă, 1935 çулта—651 тенкĕ. Иртнĕ çулта вăл ĕçлесе илнĕ вăтам ĕçукçи 1.095 тенке çитиӳснĕ.

Йулашки çулсем хушшинче рабочи çемйисен апатланасси те чылай лайăхланнă. Пилĕк çул çурă хушшинче тулă çăнăхĕ илни ултă хут ӳснĕ. Какай, пулă, сĕт, фруктăсем—рабочи çемйисене апат-çимĕç хатĕрлес çĕрте чи кирлĕ продуктăсем пулса тăчĕç. 1932 çулта çемйери кашни çын уйăхра 1,1 килограм аш-какай çинĕ пулсан, халь—2,7 килограм какай кирлĕ. Çавăн пекех, сĕт тата сив çу илни икĕ хут çурă, сală илни—8 хут, çăмарта илни 16 хут ӳснĕ.

(ТАСС).

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çар љотчикĕсен Зыкăвпа Йегорăв йулташсен пĕтĕм тĕнчери виçĕ рекорчĕ

ССР Сойузĕн Косарĕв йачĕпе тăракан Тĕп аероклуб Пĕтĕм тĕнчери авиаци федерацинчен (ФАИ) кăçалхи çентаберĕн 19-мĕшĕнче Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çар љотчикĕсем Зыкăвпа Йегорăв йулташсем нумай вăхăт хушши вĕçнине иккĕмĕш, виççĕмĕш тата тăваттăмĕш „А" клас категорисем тăрăх пĕтĕм тĕнчери рекорд тунă тесе çирĕплетни çинчен пĕлтернине илнĕ. Зыкăвпа Йегорăв йултăшсем пĕчĕк кубатурăлă аеростат çинче сывлăшра 29 сехет те 40 минут пулнă.

(ТАСС).

Йекатеринă Медникăвăн вĕçевĕсене пĕтĕм тĕнчери рекордсем тесе йышăннă

ССР Сойузĕнчи Косарĕв йачĕпе тăракан тĕп аероклубăн паллă љотчици—спортсменки Йекатеринă Медникăвă çентаберĕн 23-мĕшĕнче 100 километра вĕçсе хăвăрт вĕçес йенĕпе рекорд тунă. Вăл А.С.Йакăвлĕв инженер конструкцилене пĕр моторлă „УТ—1" гидроплан çинче пĕр сехет хушшинче 197 километр та 217 метр вĕçнĕ. Медникăвă йулташ çав вĕçевре ку таранччен тунă пĕтĕм тĕнчери рекордран та иртсе кайнă. Ку таранччен вăл рекорда Америкă љотчицисем Кристаљ Моури тата Едит Мак-Кан тунă пулнă, вĕсем пĕр сехет хушшинче 127,361 километр вĕçнĕ.

Çентаберĕн 27-мĕшĕнче Медникăвă йулташ çӳле вĕçсе хăпарас йенĕпе тепĕр çĕнĕ рекорд тунă. „УТ—1" гидросамољот çинче вăл 4.082 метр çити вĕçсе хăпарнă.

ССР Сойузĕнчи Косарĕв йачĕпе тăракан тĕп аероклуб Пĕтĕм тĕнчери авиаци федерацин (ФАИ) президиумĕнчен Йекатеринă Медникăвăн икĕ вĕçевне те „С—БИС" класпа хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери рекорчĕсем тесе йышăнни çинчен пĕлтернине илнĕ.

(ТАСС).

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Граждански Сывлăш флочĕн Инçет Хĕвелтухăçĕнчи управленин љотчикĕсем, вĕсем тайгăра „Родина" самољот екипажне шыраса тупнă. Сулахайран сылтăмала: Н. М Деркунский, М. Е. Сахăрăв, А. Й. Овечкин.

(„Пресклише").



Дени тата Долгорукăв художниксен плакачĕ, „Искусство" издателстви кăларнă

В. Иванов репродукцийĕ (Сойузфото).

Испанири фронтсенче

(ТАСС Парижран пĕлтернисем тăрăх)

Хĕвелтухăç фрончĕ

Испанин оборонă министерстви хăйĕн октаберĕн 31-мĕшĕнчи сводкинче çапла пĕлтерет: Ебро сектăрĕнче, октаберĕн 30-мĕшĕнче Сйерра Кабаљск районĕнче сарăлса кайнă çапăçусем пынă вăхăтра пăлхавçăсемпе интервентсем, пысăк çухатусем туса, ултă высота йышăнса илнĕ. Республиканецсем çĕрле атакă туса çав çӳлĕ вырăнсенчен виççĕшне кайала туртса илнĕ. Октаберĕн 31-мĕшĕнче кăнтăрла вăл районра пăлхавçăсемпе интервентсем малала атака тунă, вĕсем Германипе Итали самољочĕсене 300 самољот ытла çапăçăва хутшăнтарнă, республиканецсен позицийĕсем çине артиллерирен татти-сыпписĕр персе тăнă. Анчах республикă çарĕсем геройла çине тăрса çапăçса, фашиссен наступленине чарса лартнă. Сйерра Кабаљс тăвĕсем çинчи 636 тата 582 высотасем çинче, çавăн пекех тата Серро де сан Маркори позицисем çинче хайар çапăçусем пыраççĕ.

Республикă авиацийĕ, интервентсен авиацине хирĕç нумай хутчен çапăçăва тухса, пит те ăнăçлăн кĕрешнĕ. Республикă љотчикĕсем фашиссен темиçе самољотне персе антарнă, вăл самољотсем пăлхавçăсем йышăннă территори çине ӳкнĕ. Республикă авиацин икĕ истребител пĕтнĕ, вăл самољотсен љотчикĕсем республикă çарĕсен аллинчи çĕр çине пĕр суранланмасăрах аннă.

Центрти фронт

Сиемпосуелос сектăрĕнче (Мадридран кăнтăр - хĕвелтухăç йенче) республиканецсем пăлхавçăсемпе интервентсен икĕ тапăнăвне çăмăллăнах çĕмĕрсе тăкнă.

Ытти фронтсенче улшăнусем çук.

* * *

Октаберĕн 31-мĕшĕнче ирхине Италин пилĕк самољочĕ (виçшер моторлă самољотсем) Валенси порчĕн районĕ çине 50 бомбă йахăн пăрахнă. Темиçе çурт çĕмĕрелнĕ. Бомбăсем тивнипе Англин портра тăракан „Стенегейт" йатлă суту-илӳ пăрахутне сийенленĕ.

Çав ирхине Италин пилĕк бомбардировщикĕ Аликанте çине вĕçсе пырса, порт çине тата хулан халăх нумай пурăнакан квартăлĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Граждăнла халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем пур.

Итали Испанийе çарсем йарать

ПАРИЖ, нойаберĕн 1-мĕш. Итали фашисăмĕ хăйĕн çарĕсене Испанине йама чарăнмасть. Еспаљ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, октаберĕн 30-мĕшĕнче Италин „Фиренеце" йатлă пăрахучĕ Генуйăран Танжера пырса çитнĕ. Вăл пăрахут çинче Итали салтакĕсемпе офицерĕсем 400 çынна йахăн пулнă, вĕсене Испанийе илсе пынă. Ĕнер ирхине пăрахут Севиљйăва тухса кайнă.

Республикăлă Испанине пулăшма укçа пухаççĕ

СТОКГОЉМ, нойаберĕн 1-мĕш. Стокгољмри рабочисен организацин пин членĕ ытла Испанине пулăшма укçа пухас ĕçе хутшăннă. Вĕсем 18.500 крон (пĕр крон 1 тенкĕ те 33 пус) укçа пухнă.

Швецинче республикăлă Испанине пулăшас йенĕпе ĕçлекен комитет ларăвĕнче ку таранччен республикăлă Испанине пулăшма 1.800 пин крон пухни çинчен пĕлтернĕ. Комитет хăйĕн председателне çĕнĕрен Брантинг адвоката суйласа хăварнă.

(ТАСС).

Германи çарĕн генераљнăй штаб начаљникне улăштарнă

Гитлĕр приказĕ тăрăх, Германи çарĕн генераљнăй штаб начаљникне—Бека вырăнтан кăларнă. Бека вырăнтан кăларни фашисла партине йертсе пыракан çынсемпе Германи çарне йертсе пыракан çынсем хушшинче пысăк хирĕçӳсем пурри çинчен калакан хыпара çирĕплетет.

(ТАСС).

Китайри вăрçă

Центрти Китайра, Ианцзы шывĕ тăрăхĕнче, Хаљкоуран кăнтăр-хĕвелтухăç йеннеле вăйлă çапăçусем пуçланса кайнă. Йулашки ерне хушшинче йапонецсем Деаљ çине тапăннине Китай çарĕсем паттăррăн çĕмĕрсе тăнă. Йулашки хыпарсем тăрăх, Китай çарĕсен Деаљ хулине пăрахса хăварса, çĕнĕ позицисем çине куçмала пулнă.

Деаља йарса илнĕ хыççăн йапонецсем виçĕ колоннăпа Наљчан çине тапăнса пыраççĕ.

Çурçĕр Китайри Хебей провинцин çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче Китай çарĕсем октаберĕн 26-мĕшĕнче йапонецсене Фупин хулинчен хăваласа кăларнă, кунта Китай çарĕсем йапонецсене чылай çĕмĕрсе тăкнă. Китай çарĕсем хуларан хĕвелтухăç йеннеле чакса пыракан йапонецсене хăвалаççĕ. Октаберĕн 29-мĕшĕнче Фупин хулинчен 30 километрта вăйлă çапăçу пулса иртнĕ. Ку районра йапонецсем ... йараççĕ.

(ТАСС).

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Партин ИСТОРИЙĔ

КĔСКЕ КУРС.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиссийĕ редакциленĕ. ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă. 1938 ç.

VII СЫПĂК

БОЛЬШЕВИКСЕН ПАРТИЙĔ ОКТЯБĔРТИ СОЦИАЛИСĂМЛĂ РЕВОЛЮЦИНЕ ХАТĔРЛЕНĔ ТАТА ĂНА ИРТЕРНĔ ТАПХĂРТА.

(1917 ç. апрел—1918 ç.)

1. Çĕршыври февральти революци хыççăнхи лару-тăру. Парти вăрттăнлăхран тухни тата политикăлă ĕççене уççăн туса пыма тытăнни. Ленин Петрограда килни. Ленинăн Апрелри тезисĕсем. Партин социалисăмлă революци тăвасси патне куçмали установки.

Событисем тата Вăхăтлăх правительстви хăйне мĕнле тыткалани большевиксен çулйĕрĕ тĕрĕссине кашни куллен çирĕплетсе пынă. Вĕсем Вăхăтлăх правительстви халăхшăн мар, халăха хирĕç тăнине, миршĕн мар, вăрçăшăн тăнине, вăл мир те, çĕр те, çăкăр та парасшăн маррине тата пама та пултарайманнине уççăнрах та уççăнрах кăтартса пынă. Большевиксен ăнлантарулă ĕçĕ лайăх вырнаçса пынă.

Рабочисемпе салтаксем патша правительствине сирпĕтсе антарнă тата монархи тымарĕсене пĕтерсе пынă вăхăтра, Вăхăтлăх правительстви паллăнах монархине сыхласа хăварма туртăннă. Вăл 1917 çулти мартăн 2-мĕшĕнче Гучковпа Шульгина патша патне вăрттăн йанă. Буржуази влаçа Николай Романовăн шăллĕне—Михаила парасшăн пулнă. Анчах Гучков железнодорожниксен митингĕнче хăйĕн сăмахне „Сывă пултăр императăр Михаил“, тесе каланипе вĕçлесен, рабочисем тарăхса: „Хрен йӳçĕ кăшманран пылакрах мар“ тесе, Гучкова çийĕнчех арĕслеме тата ухтарма ыйтнă.

Рабочисем монархине кайала таврăма парас çукки уççăнах курăнса тăнă.

Рабочисемпе хресченсем, революцине туса пырса тата йун йухтарса, вăрçă чарăнасса кĕтнĕ, çăкăр тата çĕр илме тăрăшнă, хуçалăх йухăннипе кĕрешсе татăклă ĕççем тума хушнă вăхăтра, Вăхăтлăх правительстви халăхăн çак чи кирлĕ требованийĕсене хăлхана та чикмен. Çав правительстви, капиталиссемпе помещиксен чи паллă представителĕсенчен тăнăскер, хресченсем хăйсене çĕр пама ыйтнине пурнăçа кĕртме шутламан та. Вăл çавăн пекех ĕççыннисене çăкăр та пама пултарайман, мĕншĕн тесен çавна тума тырăпа услам тăвакан шултра торговецсен интересĕсене пырса тĕкĕнмеле пулнă, тырра помещиксенчен, кулаксенчен пур майсемпе те илмеле пулнă, правительстви çавна тума хăйайман, мĕншĕн тесен вăл хăй çав классен интересĕсемпе çыхăнса тăнă. Вăл çавăн пекех мир те пама пултарайман. Англи—Франци империалисĕсемпе çыхăннăскер, Вăхăтлăх правительстви вăрçа чарасси çинчен шухăшламан çеç мар, тата, пачах урăхла, Российăна империалисăмла вăрçăна тата ытларах активлă хутшăнтарма, хăйĕн империалисăмлă шухăшĕсене—Константинопăле тата проливсене çавăрса илессине, Галицине çавăрса илессине пурнăçа кĕртме революципе усă курма хăтланнă.

Халăх массисем Вăхăтлăх правительстви политики çине шанса пăхни часах пĕтсе лармалли уççăн курăнса тăнă.

Февральти революци хыççăн пулса тăнă икĕвлаçлăх ĕнтĕ нумай вăхăт тытăнса тăма пултарайманни уççăн палăрса пынă, мĕншĕн тесен пулса пыракан событисем влаç ăçта та пулин пĕр вырăнта пулмала тума хушнă: йе Вăхăтлăх правительстви вырнаçнă çĕрте, йе Советсен аллинче.

Чăн та, меньшевиксен тата есерсен соглашательле политикине хута кĕни халăх массисем хушинче халлĕхе пулнă-ха. „Часах Учредителлĕ собрани пухăнаť те пурне те чиперех йĕркелесе параť“ тесе ĕненнĕ рабочисем сахал мар пулнă-ха, тата та нумайрах салтаксемпе хресченсем пулнă, вĕсем: вăрçăна йут çĕрсене тытса илессишĕн мар, кирлĕ пулнăран, —государствăна хӳтлеме туса пыраççĕ, тесе шухăшланă. Ун пек çынсене Ленин — ырă совĕçлĕ пулии те йăнăш шухăшлакан оборонецсем, тенĕ. Çав пĕтĕм çынсем хушшинче есерсен-меньшевиксен сăмах парас тата ӳкĕтлес политикине халлĕхе тĕрĕс политикă, тесе хаклană. Анчах сăмах панисем тата ӳкĕтленисем нумайлăха çитес çукки уççăнах курăнса тăнă, мĕншĕн тесен пулса пыракан событисем тата Вăхăтлăх правительстви хăйне мĕнле тыткалани есерсемпе меньшевиксен соглашательле „политики вăхăта тăсса пымали тата шанакан çынсене улталамали политикă пулнине кунран кунах уçса кăтартса пынă.

Вăхăтлăх правительстви массăсен революцилĕ йухăмне хирĕç вăрттăн кĕрешмели политикăпа, революцине хирĕç куç хыçĕнче комбинацисем тумали политикăпа йалапах мар чарăнса тăнă. Вăл хăш чухне демократилĕ ирĕклĕхсене хирĕç уççăнах наступлени тума тытăнма хăтланса пăхнă, „дисциплинăна тĕпĕр хут туса хума“, уйрăмах салтаксем хушшинче, хăтланса пăхнă, „йĕркелĕх туса хума“, урăхла каласан, революцине буржуазишĕн кирлĕ рамкăсем хушшине кĕртсе хума хăтланса пăхнă. Анчах вăл çав йенĕпе темĕн пек тăрăшсан та, вăл ăна тума пултарайман, халăх массисем демократилĕ ирĕклĕхсене—сăмах, пичет, сойузсен, пухусен, демонстрацисен ирĕклĕхне хастаррăн пурнăçа кĕртсе пынă. Рабочисемпе салтаксем, пулса тăнă лару-тăрăва ăнланса, тавçăрса илме тата малашне мĕнле ĕçлемели пирки решени йышăнма, хăйсем пирвайхи хут çĕнтерсе илнĕ демократилĕ правасемпе çĕршывăн политикăлă пурнăçне активлă хутшăнма туллин усă курма тăрăшнă.

Большевиксен партин организацийĕсем, патша йĕрки чухне пит йăвăр условисенче вăрттăн ĕçленĕскерсем, февральти революци хыççăн вăрттăнлăхран тухнă та политикăлă тата организацилĕ ĕççене уççăн сарса пыма тытăннă. Большевиксен организацисен членĕсен хисепĕ вăл вăхăтра 40—45 пин çынран ытла пулман. Анчах вĕсем кĕрешӳре пиççе çирĕпленнĕ кадрсем пулнă. Парти комитечĕсене демократилĕ централисăм йĕрки тăрăх реорганизациленĕ. Парти органĕсене пурне те айалтан пуçласа çӳле çитийех суйласа лартмала тунă.

Парти уççăн ĕçлеме тытăнни партири хирĕçӳсене палăртнă. Каменев тата Мускав организацинчи хăшпĕр работниксем, сăмахран, Рыков, Бубнов, Ногин Вăхăтлăх правительствăна тата оборонецсен политикине условнă хута кĕмели çурмаменьшевикла позици çинче тăнă. Сталин, тин çеç ссылкăран таврăннăскер, Молотов тата ыттисем те, партин ытларахăшĕпе пĕрле, Вăхăтлăх правительствăна шанмала мар политикăшăн тăрса ĕçленĕ, оборончествăна хирĕç тăнă, миршăн активлă кĕрешме, империалисăмлă вăрçа хирĕç кĕрешме чĕннĕ. Парти работникĕсен пĕр пайĕ, вăрăм вăхăт хушши тĕрмере йе ссылкăра пулнă пирки хăйсем политикă тĕлĕшпе кайа йулнине палăртса, пăркаланнă.

Парти çулпуçĕ—Ленин кунта çукки туйăнса тăнă.

1917 çулти апрелĕн 3(16)-мĕшĕнче, йут çĕршыва хăваласа йанă çĕрте нумай вăхăт хушши пурăннă хыççăн, Ленин Российăна таврăннă. Ленин килни партишĕн, революцишĕн пит пысăк вырăн йышăнса тăнă.

Швейцарирен ĕнтĕ, революци çинчен пирвайхи хыпарсене çеç илнĕ хыççăн, Ленин „Письма из далека“ йатлă çырăвĕсенче парти патне тата Российăри рабочи клас патне çапла çырнă:

„Рабочисем! Патша йĕркине хирĕç граждан вăрçинче есĕр пролетарисен тата халăхăн тĕлĕнмеле геройсăмне палăртрăр. Сирĕн, революцин иккĕмĕш етапĕнче хăвăр çĕнтересрене хатĕрлеме, пролетарисен тата пĕтĕм халăхăн тĕлĕнмеле организацилĕхне палăртмала“ (Ленин, т. XX, стр. 19).

Петрограда Ленин апрелĕн 3-мĕшĕнче çĕрле çитнĕ. Финляндски вокзалта тата вокзал умĕнчи площадре Ленина кĕтсе илме рабочисем, салтаксем, матроссем пиншерĕн пухăннă. Ленин вакунран тухсан, массăсем калама çук хĕпĕртесе кайнă. Вĕсем Ленина алă çине çĕкленĕ те хăйсен çулпуçне çаплах вокзалăн пысăк залне çĕклесе кĕнĕ. Унта меньшевиксем Чхеидзе тата Скобелев Петроград Совечĕн йачĕпе „саламлă“ сăмахсем калама тытăннă пулнă, вĕсем хăйсен сăмахĕсенче Ленин вĕсемпе „пĕр чĕлхе“ тупассине „шанса тăратпăр“, тенĕ. Анчах Ленин вĕсене итлемен, вĕсем патĕнчен иртсе кайса рабочисемпе салтаксен масси патне пынă та, броневик çине тăрса хăйĕн чаплă сăмахне каланă, çав сăмахра вăл массăсене социалисăмлă революци çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешме чĕннĕ. „Сывă пултăр социалисăмлă революци!“—çапла вĕçленĕ Ленин хăйне йут çĕршыва хăваласа йанă çĕрте нумай çулсем хушши пурăннă хыççăн каланă хăйĕн пирвайхи сăмахне.

Российăна килнĕ хыççăн Ленин пĕтĕм вăй-хăватпа революцилĕ ĕççене туса пыма тытăннă. Килсен тепĕр кунне Ленин большевиксен пухăвĕнче вăрçăпа революци çинчен доклад тунă, унтан хăйĕн доклачĕн тезисĕсене большевиксемсĕр пуçне тата меньшевиксем те пулнă пухура тепĕр хут каласа панă.

Ку вăл Ленинăн Апрелри чаплă тезисĕсем пулнă, вĕсем партипе пролетариата буржуалă революциren социалисăмлă революци патне куçмали уçăмлă революцилĕ çулйĕр панă.

Ленинăн тезисĕсем революцишĕн, партин малашнехи ĕçĕшĕн пит пысăк вырăн йышăнса тăнă. Революци çĕршывăн пурнăçĕнче пит пысăк улшăну пулнине пĕлтернĕ, кĕрешӳн çĕнĕ условийĕсенче, патша йĕркине сирпĕтсе антарнă хыççăн, çĕнĕ çулпа хăйулăн та шанчăклăн кайма партине ĕнтĕ çĕнĕ ориентировкă кирлĕ пулнă. Çав ориентировкăна партине Ленинăн тезисĕсем панă.

Ленинăн Апрелри тезисĕсем парти буржуалă-демократилĕ революциren социалисăмлă революци патне куçассишĕн, революцин пирвайхи етапĕнчен иккĕмĕш етапĕ патне—социалисăмла революци патне куçассишĕн кĕрешессин генилĕ планне панă. Халиччен хăйĕн пĕтĕм историйĕпе парти çак аслă задачăна пурнăçа кĕртме хатĕрленсе çитнĕ. 1905 çултах ĕнтĕ Ленин хăйĕн „Две тактики социал-демократии в демократической революции“ брошӳринче: пролетариат патша йĕркине сирпĕтсе антарнă хыççăн социалисăмлă революци тума тытăнаť, тесе каланă. Тезиссенче çĕнни çакă пулнă: вĕсем социалисăмлă революци патне куçма тытăнассин теори тĕлĕшпе никĕсленĕ, конкретлă планне панă.

Економикă тĕлĕшпе çакăн пек куçса пымали ĕççене тумала: çĕршывра пĕтĕм çĕрсене национализацилемеле—çавăн чухне помещиксен çĕрĕсене конфискацилемеле, банксене пурне те пĕр национальнăй банка пĕрлештермеле тата вĕсене рабочисен депутачĕсен Совечĕ контроль туса тăрассине кĕртмеле, обществăлă производствăна тата продуктăсене валеçессине контроль туса тăрассине кĕртмеле пулнă.

Политикă тĕлĕшпе Ленин парламентлă республикăран Советсен республикĕ патне куçма сĕннĕ. Ку вăл марксисăмăн теорийĕ тата практики йенĕпе малала пысăк утăм туни пулнă. Халиччен марксисла теоретиксем парламентлă республикă социалисăм патне куçмали политикăлă чи лайăх формă, тесе шутланă. Халĕ Ленин парламентлă республикă вырăнне Советлă республикă туса хума сĕннĕ, Советлă республикă—капиталисăмран социалисăма куçнă тапхăрта обществăн политикăлă организацийĕн чи тивĕçлĕ форми пулса тăраť.

„Российăри хальхи вăхăтăн хăйне йеврĕлĕхĕ вăл,—тесе каланă тезиссенче,—революцин пĕррĕмĕш етапĕнчен, пролетариат çителĕклех ăнланулă тата организацилĕ пулайман пирки влаçа буржуази аллине панă етапран,—унăн иккĕмĕш етапне куçса пыни пулаť, вăл влаçа пролетариатпа хресченсен чи чухăн сийĕсен аллине памала“ (Ленин, т. XX, стр. 88).

Малала тата:

„Парламентлă республикă мар,—рабочисен депутачĕсен Совечĕсенчен ун патне таврăнни кайала утăм туни пулнă пулĕччĕ,—пĕтĕм çĕршывĕпех, айалтан пуçласа çӳле çитийех рабочисен, батраксен тата хресченсен депутачĕсен Совечĕсен республикĕ“ (çавăнтах, стр. 88).

Вăрçă, тенĕ Ленин, çĕнĕ, Вăхăтлăх правительстви чухне те çаратулă, империалисăмлă вăрçах пулса йулаť. Парти задачи çавна массăсене ăнлантарса парасси тата вĕсене буржуазине сирпĕтсе антармасăр вăрçăна вăйпа ирĕксĕрлени пе тунă мирпе мар, чăннипех демократилĕ мирпе пĕтерме май çуккине кăтартса парасси пулаť.

Вăхăтлăх правительстви тĕлĕшпе Ленин çакăн пек лозунг кăларса тăратнă: „Вăхăтлăх правительствăна нимĕнле хута кĕни те пулмала мар“.

Ленин, малала, тезиссенче: пирĕн парти халлĕхе Советсенче сахаллăхра-ха, унта меньшевиксемпе есерсен блокĕ, пролетариат çине буржуалă влийани параканскер, пуçпулса тăраť, тесе кăтартса панă. Çавăнпа та партин задачи çакăн пек пулнă:

„Массăсене рабочисен депутачĕсен Совечĕсем революцилĕ правительствăн пĕртен-пĕр пулма пултаракан форми пулса тăнине ăнлантарса парасси, çавăнпа та, çак правительстви буржуази хыççăн кайма пăрахиччен, пирĕн задачă—вĕсен тактикин йăнăшĕсене тӳсĕмлĕн, тăтăшах, çине тăрса, уйрăмах массăсен пурнăçри кирлĕ ыйтăвĕсемпе килĕшӳлĕ туса, ăнлантарса парасси çеç пулма пултараť. Хамăр сахалтарахра чухне, епĕр критиклес тата йăнăшсене палăртас ĕçе туса пыратпăр; çав вăхăтрах государствăн пĕтĕм влаçĕ рабочисен депутачĕсен Совечĕсен аллине куçма кирли çинчен вĕрентетпĕр...“ (Ленин, т. XX, стр. 88).

Ку вăл çакна пĕлтернĕ: Ленин Вăхăтлăх правительствăна, çав вăхăтра Советсем шанса тăнипе усă курнăскерне, хирĕç восстани тума чĕнмен, ăна сирпĕтсе антарма хушман, ăнлантару тата вербовкă ĕçне туса пынипе Советсенче нумайтарахăш пайне çĕнтерсе илме, Советсен политикине улăштарма, Советсем урлă—правительстви составне тата политикине улăштарма тăрăшнă.

Ку вăл—революцине мирлĕн аталантармали установкă пулнă.

Ленин, малала, „таса мар кĕпе тумтире“ хывса ывăтма—парти социал-демократла йатлă пулнине пăрахăç тума требовани лартнă. II-мĕш Интернационал партийĕсем те, вырăс меньшевиксем те хăйсене социал-демократсем, тенĕ. Çав йата оппортуниссем, социалисăма пăрахнă изменниксем варалантарнă, намăса кăларнă. Ленин большевиксен партине **коммуниссен партийĕ**, тесе йат пама сĕннĕ, Маркспа Енгельс хăйсен партине çавăн пек йат панă. Çавăн пек йат пани ăслăлăх йенчен тĕрĕс, мĕншĕн тесен большевиксен партин чи пысăк тĕллевĕ коммунисăма çитесси пулса тăраť. Етемлĕх капиталисăмран тӳрех социалисăма çеç, урăхла каласан, производствă средствисене пĕрлешӳлĕ тытасси тата продуктăсене кашнин ĕçне кура валеçесси тăрасси патне куçма пултараť. Ленин: пирĕн парти инçетерех пăхаť, тенĕ, социалисăм пурпĕрех майпен коммунисăма ӳссе куçмала, унăн йалавĕ çинче: „кашнинчен—унăн пултарулăхне кура, кашнине—ăна мĕн кирлине кура“, тесе çырнă.

Йулашкинчен, Ленин хăйĕн тезисĕсенче çĕнĕ Интернационал, оппортунисăмран, социал-шовинисăмран ирĕклĕ III-мĕш, Коммунисла Интернационал туса хума требовани лартнă.

Ленинăн тезисĕсем пирки буржуази, меньшевиксем, есерсем хайаррăн ӳлеме тытăннă.

Меньшевиксем рабочисем патне воззвани йанă, вĕсен воззванийĕ „революци хăрушлăхра“ тесе асăрхаттарнипе пуçланнă. Хăрушлăх, меньшевиксен шухăшĕпе, влаç рабочисемпе салтаксен депутачĕсен Совечĕсен аллине куçмала тесе большевиксем требовани кăларса тăратнинче пулнă.

Плеханов хăйĕн „Единство“ йатлă хаçатĕнче статйа пичетлесе кăларнă, унта вăл Ленин каланă сăмаха „сульланса калани“, тенĕ. Плеханов Чхеидзе меньшевик сăмахне илсе кăтартнă, Чхеидзе: „Революци тулашĕнче Ленин пĕчченех тăрса йулĕ, епĕр хамăрăн çулпа кайăпăр“, тенĕ.

Апрелĕн 14-мĕшĕнче большевиксен Петроградри пĕтĕм хула конференцийĕ пулса иртнĕ. Вăл Ленинăн тезисĕсене ырланă тата хăйĕн ĕçне вĕсене никĕсе хурса туса пынă.

Кăштах вăхăт иртсен партин вырăнсенчи организацийĕсем те Ленинăн тезисĕсене ырланă.

Пĕтĕм парти,—Каменев, Рыков, Пйатаков йышши пĕччен темиçе çынсемсĕр пуçне,—Ленинăн тезисĕсене пит пысăккăн кăмăлласа йышăннă.

2. Вăхăтлăх правительствă кризисĕ пуçланни. Большевиксен партин Апрелри конференцийĕ.

Большевиксем революцине малала сарса пыма хатĕрленнĕ вăхăтра, Вăхăтлăх правительстви çаплах хăйĕн халăха хирĕçле ĕçне туса пынă. Апрелĕн 18-мĕшĕнче Вăхăтлăх правительствăн йут çĕршывĕççĕсен министрĕ Милюков сойузниксене „пĕтĕм халăх тĕнче вăрçине татăклă çĕнтерӳ патне çитерессишĕн тăни тата Вăхăтлăх правительстви хамăрăн сойузниксем тĕлĕшпе илнĕ обиазательствăсене пĕтĕмĕшпех пурнăçа кӳртме шутлани“ çинчен пĕлтернĕ.

Çапла вара, Вăхăтлăх правительстви патша договăрĕсемшĕн шанчăклăн тăма тупатунă, халăхăн йунне „татăклă çĕнтерӳ“ тума империалиссене мĕн чухлĕ кирлĕ пулаť, çавăн чухлĕ йухтарма сăмах панă.

Апрелĕн 19-мĕшĕнче çав зайавлени („Милюков ноти“) çинчен рабочисемпе салтаксем пĕлнĕ. Апрелĕн 20-мĕшĕнче большевиксен партин Тĕп Комитечĕ массăсене Вăхăтлăх правительствăн империалисăмлă политикине хирĕç протестлеме чĕннĕ. 1917 çулти апрелĕн 20—21-мĕшĕсенче (майăн 3—4-мĕшĕсенче) „Милюков нотине“ хирĕç тарăхса кайнă рабочисемпе салтаксем, 100 пин çынран сахал мар, демонстрацине тухнă. Йалавсем çинче çакăн пек лозунгсем пулнă: „Вăрттăн договăрсене пичетлесе кăлармала!“, „Тĕп пултăр вăрçă!“, „Пĕтĕм влаç Советсене!“. Рабочисемпе салтаксем хула хĕррисенчен центра, Вăхăтлăх правительстви вырнаçнă çĕре пынă. Невскинче тата ытти вырăнсенче те буржуазин уйрăм групписемпе çапăçнисем пулнă.

Чи уççăнрах кĕрешекен контрреволюционерсем, Корнилов генерал пеккисем, демонстрантсене персе пăрахма чĕннĕ, çавна тума приказсем те панă. Анчах çар чаçĕсем, çавăн пек приказсене илнĕ хыççăн, вĕсене пурнăçа кĕртессине пăрахăç тунă.

Партин Петроград комитечĕн членĕсен пысăк мар группи (Богдатйев тата ыттисем те) демонстраци вăхăтĕнче Вăхăтлăх правительствăна халех сирпĕтсе антарас лозунга кăларса тăратнă. Большевиксен партин Тĕп Комитечĕ: çавăн пек лозунг вăхăтсăр тата тĕрĕс мар, вăл партине Советсен ытларахăшне хăй йенне кĕрешсе илме чăрмантараť тата партин революци мирлĕн аталанмали установкине хирĕçле пыраť, тесе шутласа, çав „сулахай“ авантюриссен хăтлануне хыттăн сивленĕ.

Апрелĕн 20—21-мĕшĕсенчи событисем Вăхăтлăх правительстви кризисĕ пуçланнине пĕлтернĕ.

Ку вăл меньшевиксемпе есерсен соглашательле политики пирвайхи хут пысăккăнах çурăлни пулнă.

1917 çулти майăн 2-мĕшĕнче массăсем хĕснипе Вăхăтлăх правительстви составĕнчен Милюкова тата Гучкова кăларнă.

Пирвайхи коалицилĕ Вăхăтлăх правительстви пулса тăнă, унăн составне буржуази представителĕсемпе пĕрлех меньшевиксем (Скобелев, Церетели) тата есерсем (Чернов, Керенский т. ыт.) кĕнĕ.

Çапла вара, меньшевиксем, 1905 çулта социал-демократин представителĕсем **революцилĕ** Вăхăтлăх правительствăна хутшăнма йуранине йышăнманскерсем, халĕ хăйсен представителĕсем **контрреволюцилĕ** Вăхăтлăх правительствăна хутшăнни йурăхлă тесе йышăннă.

Ку вăл меньшевиксемпе есерсем контрреволюцилĕ буржуази лагерьне куçни пулнă.

1917 çулти апрелĕн 24-мĕшĕнче большевиксен VII-мĕш (Апрелри) конференцийĕ уçăлнă. Парти пурăнма пуçланăранпа пирвайхи хут большевиксен конференцийĕ уççăн пухăннă, вăл конференци хăйĕн ĕçĕсемпе парти историнче, парти сийĕсĕ пекех, пысăк вырăн йышăнса тăраť.

Пĕтĕм Российăри Апрелри конференци парти тăвăллăн ӳссе пынине кăтартса панă. Конференцире ĕç тăвакан сасăпа 133 делегат тата канашлакан сасăпа 18 делегат пулнă. Вĕсем партин организациленнĕ 80 пин членсен представителĕсем пулнă.

Конференци вăрçăн тата революцин пур тĕп ыйтăвĕсем тăрăх та: хальхи вăхăт çинчен, вăрçă çинчен, Вăхăтлăх правительстви çинчен, Советсем çинчен, аграрлă ыйту çинчен, нацилĕ ыйту çинчен т. ыт. те сӳтсе-йавса, вĕсем тăрăх парти çулйĕрне туса хатĕрленĕ.

Ленин хăйĕн докладĕнче вăл малтанах Апрелри тезиссенче каласа панă положенисене аталантарнă. Парти задачи—революцин пĕррĕмĕш етапĕнчен, „влаçа буржуази аллине панăскерĕнчен,—унăн иккĕмĕш етапне“ куçассине пурнăçа кĕртесси пулнă, „вăл влаçа пролетариатпа хресченсен чи чухăн сийĕсен аллине памала“ (Ленин). Партин социалисăмлă революцине хатĕрлемели çул çине тăмала. Партин чи çывăхри задачи вырăнне Ленин: „Пĕтĕм влаç Советсене“ текен лозунга кăларса тăратнă.

„Пĕтĕм влаç Советсене“ текен лозунг икĕвлаçлăха, урăхла каласан, влаçа Вăхăтлăх правительстви та тата Советсем те тытса тăнине пĕтерме кирлине, **пĕтĕм влаçа Советсене** памалине, помещиксемпе капиталиссен представителĕсене влаç органĕсенчен хăваласа кăлармалине пĕлтернĕ.

Конференци партин чи пысăк задачисенчен пĕри çак чăнлăха—„хăйĕн характерĕпе Вăхăтлăх правительстви помещиксемпе буржуази пуçпулса тăмали органĕ“ пулнине, çавăн пекех тата есерсемпе меньшевиксен, суйа сăмахсем парса халăха улталакансен тата ăна империалисăмлă вăрçăпа контрреволюци çапни тивмеле çĕре илсе пыракансен, соглашательле политики вилĕм кӳрекенскер пулнине массăсене ывăнма пĕлмесĕр ăнлантарса парасси пулаť, тесе йышăннă.

Конференцире Ленина хирĕç Каменев тата Рыков тухса каланă. Вĕсем меньшевиксем хыççăн—Российă социалисăмлă революци вальли ӳссе çитмен, Российăра буржуалă республикă çеç пулма пултараť, тенĕ. Вĕсем партипе рабочи класа Вăхăтлăх правительствăна „контроль тунипе“ чарăнса тăма сĕннĕ. Чăннипе вĕсем, меньшевиксем пекех, капиталисăма сыхласа хăварас, буржуази влаçне сыхласа хăварас позици çинче тăнă.

Зиновйев та çавăн пекех конференцире—большевиксен партин Циммервальдри пĕрлешӳре йулмала-и йе çав пĕрлешӳрен уйăрăлмала тата çĕнĕ Интернационал тумала текен ыйту тăрăх Ленина хирĕç тухса каланă. Вăрçă çулĕсем кăтартса панă тăрăх, çав пĕрлешӳ, миршăн пропагандă туса пырса, çапах та ĕçре буржуалă оборонецсенчен уйăрăлман. Çавăнпа та Ленин вăл пĕрлешӳрен халех тухмала тата çĕнĕ, Коммунисла Интернационал тумала, тесе çине тăнă. Зиновйев циммервальдцăсемпе пĕрлех йулма сĕнӳ панă. Зиновйевăн çав выступленине, унăн тактикине „архиоппортунисла тата сийенлĕ“ тесе, Ленин хыттăн сивленĕ.

Апрелри конференци çавăн пекех аграрлă тата нацилĕ ыйтусене сӳтсе-йавнă.

Ленин аграрлă ыйту çинчен тунă доклад тăрăх конференци помещиксен çĕрĕсене конфискацилесси, вăл çĕрсене хресченсен комитечĕсен аллине парасси çинчен тата çĕршывра мĕнпур çĕрсене национализацилесси çинчен решени йышăннă. Большевиксем хресченсене çĕршĕн кĕрешĕве чĕннĕ, хресченсен массисене большевиксен партийĕ помещиксене сирпĕтсе антарма хресченсене ĕçре пулăшакан пĕртен-пĕр революцилĕ парти пулса тăнине кăтартса панă.

Сталин йулташ нацилĕ ыйту çинчен тунă доклад пысăк вырăн йышăнса тăнă. Ленин тата Сталин революциччен, империалисăмлă вăрçă умĕнхи вăхăтра, нацилĕ ыйту тăрăх большевиксен парти политикин никĕсĕсене туса хатĕрленĕ. Ленин тата Сталин: пролетариат партин пусмăрти халăхсен империалисăма хирĕçле пыракан нацилĕ ирĕклĕхлĕ йухăмне пулăшса пымала, тенĕ. Çавна май большевиксен партийĕ нацисен самоопределени правишĕн—уйăрăлса хăйне уйрăм государствăсем туса хурасси таранах—тăнă. Çак шухăша конференцире Тĕп Комитет докладчикĕ Сталин йулташ хӳтĕленĕ.

(Малали 3-мĕш страницăра)

М А Л А Л И.

Ленина тата Сталина хирĕç Пйатаков тухса калана, вăл Бухаринпа пĕрле вăрçă çулĕсенчех напилĕ ыйту тĕлĕшпе национал-шовинисла позици çинче тăна. Пйатаков тата Бухарин нацисен самоопределени правине хирĕç тăна.

Нацилĕ ыйту тĕлĕшпе парти татăклă та тăтăшах тĕрĕс позици çинче тăни, парти нацисен тулли пĕртанлăхĕшĕн тата нацилĕ пусмăрлăхпа нацилĕ пĕртанмарлăхăн пур формисене те пĕтерессишĕн кĕрешни пусмăрти националлăхсем партине йуратса пулăшса пырассине туса хунă.

Акă нацилĕ ыйту тăрăх Апрелри конференци йышăннă резолюци текстĕ:

„Помешчиксем, капиталиссем тата вак буржуази хăйсен класлă привилегийĕсене сыхласа хăварас тата тĕрлĕ националлăхсен рабочийĕсене пĕр-пĕринчен уйăрса тăрас тесе, нацилĕ пусмăрлăх политикишĕн, самодержавипе монархирен йулнăскерсем, тăраççĕ. Кучухнехи империалисăм, вăйсăр халăхсене пăхăнтарма туртăннисене вăйлатса пырса, нацилĕ пусмăрлăх çивĕчленнин çĕнĕ фактăрĕ пулса тăрать.

Капиталисăмлă обшчĕствăра нацилĕ пусмăрлăха сирсе пăрахма пулать пулсан, вăл государствăн пур нацисемпе чĕлхесен тулли пĕртанлăхне пурнăçа кĕртекен пĕтĕмпех-демократилĕ йĕрки тата управленийĕ чухне çеç пулма пултарать.

Российă составне кĕрекен нацисен пурин те ирĕккĕнех уйăрăлмали тата хăйне уйрăм государствă туса хумали правине йышăнмала. Çавăн пек правана йышăнманни тата ăна пурнăçа кĕртессине гарантилекен мерăсене йышăнманни вăйпа тытса илессисен тата аннексисен политикишĕн тăнипе пĕрех. Пролетариат нацисен уйăрăлмали правине йышăнни çеç тĕрлĕ нацисен рабочийĕсен тулли солидарнăçĕ пулмала тăвать тата нацисем чăннипех пĕр-пĕринпе демократилĕ çывхарассине пулăшать...

Нацисен ирĕккĕн уйăрăлмали прави çинчен тăракан ыйтăва вăл йе ку наци вăл йе ку самантра уйăрăлни кирлипе кирли марри çинчен тăракан ыйтупа пăтраштарса йама йурамасть. Çак йулашки ыйтăва пролетариат партийĕ кашни уйрăм тĕлте пĕтĕмпех хăйне уйрăмăн, пĕтĕм обшчĕствăлă аталану интересĕсене кура тата пролетариатăн социалисăмшăн пыракан класлă кĕрешĕвĕн интересĕсене кура татса пама тивĕçлĕ.

Парти анлă облăçлă автономи пулмала тума, çӳлтен надзор туса тăрассине пăрахăç тума, обйазатĕлнăй государствĕннăй чĕлхене пăрахăç тума, управлени ĕçĕсене хăйсем тĕллĕн туса пыракан тата автономлă облăçсен чиккисене вырăнти халăх хăй хуçалăхпа йăла условийĕсене, халăхăн нацилĕ составне т. ыт. те шута илни тăрăх палăртма требовани лартать.

Пролетариат партийĕ „культурăлă-нацилĕ автономи" текеннине, урăхла каласан, шкул ĕçне тата ыт. те государствă туса пырассинчен илсе хăйне майлă национальнăй сеймсен аллине парассине татăклăнах хирĕç тăрать. Пĕр вырăнта пурăнакан тата пĕр предприйатирех ĕçлекен рабочисене культурăлă-нацилĕ автономи искусственнă вăл йе ку „нацилĕ культурăсем" çумне çыпçăнса тăни тăрăх уйăрать, урăхла каласан, рабочисем уйрăм нацисен буржуалă культурипе çыхăнса тăнине вăйлатать, çав вăхăтрах социал-демократин задачи пĕтĕм тĕнчери пролетариатăн интернационаллă культурине вăйлатасси пулса тăрать.

Парти конституцине нацисенчен пĕрин кирек мĕнле привилегийĕсене те, сахалтарах халăхлă нацисен прависене кирек мĕнле пăснисене те пăрахăç тăвакан тĕп саккун кĕртме требовани лартать.

Рабочи класăн интересĕсем Российăри мĕнпур нацисен рабочийĕсене пролетарилĕ пĕрлĕхлĕ организацисенче, политикăлă, професçилĕ, кооперативлă-çутĕç т. ыт. организацисенче пĕрлештерме хушаççĕ. Тĕрлĕ национальнăçсен рабочийĕсене пĕрлĕхлĕ организацисенче çавăн пек пĕрлештерни кăна пролетариата пĕтĕм тĕнчери капитала хирĕç тата буржуалă националисăма хирĕç çĕнтерӳлĕ кĕрешсе пыма май парать" (ВКП(б) в резолюциях, часть I, стр. 239—240).

Çапла вара, Апрелри конференцире Каменĕвăн, Зиновйĕвăн, Пйатаковăн, Бухаринăн, Рыкăвăн тата вĕсемпе пĕр шухăшлă пулнă сахал йышлă çынсен оппортунисла, Ленина хирĕçле линине тăрă шыв çине кăларнă.

Конференци пĕр шухăшлă пулса Ленин хыççăн кайнă, пĕтĕм чи пысăк ыйтусем тăрăх татăклă позици йышăннă тата социалисăмлă революци çĕнтерессипатне çул тытса пынă.

(ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн малали „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн çитес номĕрĕсенче пичетленет).

Канашри вакунсем йусакан савăтри вăтам шкулта.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: вĕренекенсен стена хаçачĕн редколлегийĕ стена хаçачĕн черетлĕ номĕрне кăларма хатĕрленет. Сулахайран сылтăмала: Перфилйĕв, Новикăвă, Никифăрăв, Бабайĕв, Франк.

К. Бабайĕв фото-ӳкерчĕкĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Пире пулăшу кирлĕ

Трак МТС 1936 çултанпа ĕçлет. Иртнĕ вăхăтра МТС-чи пуçламĕш парторганизацинче Галкин, Дмитрийăвă йулташсем парторг пулса ĕçлерĕç. Унчухне партилĕ-политикăлă ĕçсем начарччĕ. Çавăнпа та 1938 çулхи май уйăхĕччен парти ретне пĕр çынна та илмен пулнă.

Кăçал, май уйăхĕнчен вара, парти кандидатне 7 çынна, сочувствуйушчине 4 çынна илнĕ. Вĕсенчен трактăриссем 5, комбайнеркă—I. Халĕ виççĕшне ПСК(б)П Обкомĕ çирĕплетнĕ, ыттисене пăхса тухман-ха.

Пуçламĕш парторганизацине партилĕ-политикăлă ĕçе вăйлатма пысăк пулăшу кирлĕ. Вăл халлĕхи вăхăтра çителĕксĕр.

МТС-чи парторганизацине пулăшу парассипе парти обкомĕн йалхуçалăх пайĕ те çителĕклĕ ĕçлемест. Епĕр унта май уйăхĕнчен пуçласа 2 протокол йатăмăр. Анчах ку таринччен пĕр ответ та илеймерĕмĕр.

Малашне МТС-чи пуçламĕш парторганизацисене пысăк пулăшу парса, вĕсен ĕçĕсене вăйлатмала.

Михайлăв.
МТС-ри парторг.

Парти райкомĕ йăнăшсене тӳрлетме пулăшать

ПАТАРЙЕЛ. Çак кунсенче парти райкомĕ комсомолăн отчотпа суйлавĕсем мĕнле иртсе пыни çинчен комсомол райкомĕн отчотне итлерĕ. Малтанхи итогсем комсомолăн отчотпа суйлав пухăвĕсем кирлĕ таран идейăлă çӳллĕшре иртсе пыманнине кăтартса параççĕ. Комсоргсемпе комсомол комитечĕсен çекретарĕсем хăйсен отчочĕсенче конкретлă примерсем сахал кăтартса параççĕ, критикăпа самокритикă та вара çавăн майлах пулать.

Тăшмансен йулашкисене тата вĕсен сăтăрла ĕçĕсене тăпăлтарса пĕтерессиçинчен отчотсенче те, тухса калакансем те сахал калаççĕ. Акă, Патăрйелĕнчи „Ленин çулĕ" колхоз çумĕнчи пуçламĕш организацинчи пухура комсомолĕцсем ку тĕлĕшпе калаçман та. Малтанхи кунсенчех отчотпа суйлав пухăвĕсем вăхăтра иртменнисем пулчĕç. Районри колхоз шкулĕнчи, вăтам шкул çумĕнчи пуçламĕш организацисенче ПСÇЛКС райком представитĕлĕсем пыман пирки отчотпа суйлав пухăвĕсем планпа пăхнинчен ик-виçĕ кун кайа йулса иртнĕ. Туçари вăтам шкулта отчотпа суйлав пухăвне нимĕн хатĕрленмесĕрех иртернĕ. Патăрйелĕнчи вăтам шкулта ПСÇЛКС Тĕпкомĕн инструкцине пăснă.

Парти райкомĕ комсомол райкомне çак йăнăшсене хăвăрт тӳрлетме тата парти пуçламĕш организацисене комсомолăн отчотпа суйлав пухăвĕсене иртерес ĕçре пулăшса йертсе пыма хушса хăварчĕ.

Ник. Пушкин.

Комитет йапăх ĕçленĕ

Канашри медицинă шкулĕнчи комсомол организацин отчотпа суйлав пухăвĕ комитет ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пулнине палăртрĕ.

Комсомол комитечĕ çамрăк комсомолĕцсем тата комсомола кĕме хатĕрленекен студентсем хушшинче нимĕн те ĕçлемен. Студентсем хушшинче политикăлă-массăлă ĕç йапăх пулнипе хăшпĕрисем йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлса кайнă.

Студентсем хушшинче социалисăмлă ăмăртăва кирлĕ пек сарса йаман, çтена хаçачĕсем тухмаççĕ.

Комсомол организацийĕ çакнашкал çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те туман. Çапах та комитет çекретарĕ Адрианăвă йулташ хăйĕн отчотĕнче çитменлĕхсем çинчен нимĕн те каламарĕ. Пренире тухса каланă йулташсем ĕçри çитменлĕхсене, комитет йапăх ĕçленине палăртрĕç.

П. Архипăв.

Октăбĕр уйавĕ умĕнхи ăмăрту

Шкулсем уйава хатĕрленеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Хулари пур шкулсенче те Октăбрти Социалисăмлă Аслă революци 21 çул тултаракан уйава хатĕрленес тĕлĕшпе хĕрӳлĕ ĕç пырать.

Кирăв йачĕпе тăракан вăтам шкулта вĕренекенсем уйава лайăх отметкăсем илнипе кĕтсе илеççĕ. Кунта кашни клас ăмăртăва тухнă. Уйава савăнăçлăн иртерме мĕн кирлисене хатĕрлеççĕ. Драмкружок (руководитĕлĕ В. Галинă йулташ) „Наши юноши", „Полевой суд" инсценировкăсем лартса пама хатĕрленет. Хор кружокĕ „Песня о родине" тата „Песня единого фронта" йурăсене нимĕçле йурласа пама хатĕрленет.

Кагерăв йулташ йертсе пыракан ПВХО кружокĕ (кружокра 101 çын) 5 заньатие туса иртернĕ. Демонстрацине вĕсем противогазсем тăхăнса тухаççĕ. Физкультурă коллективĕ тĕрлĕрен ташăсем, вăййăсем хатĕрлет. Заньатисем кашни кунах пулса иртеççĕ.

Куйбышĕв йачĕпе тăракан вăтам шкулта, рабфакра тата хапрăк-савăт шкулĕнче те уйава хастарлăн хатĕрленеççĕ. Кунта та музыкă, физкультурă, хор кружокĕсем çĕнĕ йурăсем, çĕнĕ номĕрсем хатĕрлеççĕ.

Хар. Лисин.

Икĕ нормă чикĕ мар

Быстров йулташ йертсе пыракан каменшчиксен бригади Шупашкарти çĕнĕ стройкăра октăбĕрĕн 7-мĕшĕнче ĕçлеме пуçланă. Вăл бригадă халĕ пысăк тухăçлăхпа ĕçлет.

Октăбĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртура малти ретре пырать. Бригадă членĕсем пурте икшер нормăран кайа мар тултараççĕ. Чапрайĕвă йулташ хăйĕн нормине 240 процент, Григорйĕв, Йакăвлĕв йулташсем 200 процентшар тултараççĕ.

В. Дмитрийĕв.

Шкул заведуйушчийĕ ăçта кайнă-ши?

Переменă вăхăтĕнче Паймит (Куславкка р.) шкулĕн коридорĕнче ачасем йанратсах йурларĕç.

— Питĕ маттур йурлаççĕ вара, терĕмĕр учитĕлницăна шкул канцелйаринче.

— Халĕ кунта икĕ класĕ кăна, 2-мĕшпе 4-мĕш классем пайанхипе 3-мĕш кун вĕренмеççĕ.

— Мĕншĕн апла?

— Шкул пуçлăхĕ Морозăв районри çутĕç пайне кайатăп тесе тухса кайрĕ те пайан кун та çук. Таçта кайса çухалчĕ ĕнтĕ, — тесе кульанса ларать пĕр пĕччен йулнă учитĕлницă.

Урок пуçланас умĕн коридора тухрăмăр. Икĕ кĕтесре икĕ ача макăрса тăраççĕ, — вĕсем тӳпелешнĕ.

Урок пуçланчĕ. 1-мĕшпе 3-мĕш клас пĕрле вĕренеççĕ. Пĕринче арифметикă, теприн че чăваш чĕлхи урокĕсем. Вĕсем ним йĕркесĕр пăтранчăк иртрĕç.

Вĕренӳ пахалăхĕпе воспитани ĕçĕ йапăхни райçутĕç пайĕ Паймит шкулĕ çине çавăрăнса пăхманнинчен килет. Кунта чылай вăхăт хушши шкул пуçлăхĕ пулса пурăннă тăшман Васийлĕв сахал мар сăтăрланă. Çакăн хыççăн та районри çутĕç пайĕ Паймит шкулне опытлă педагогсем йарса паман.

Епĕр Морозăв ăçта кайнине тĕплĕн пĕлместпĕр. Анчах пирĕн акă мĕн çинчен асăрхаттарас килет: ЧАССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе Куславккă районĕнчи çутĕç пайĕн Паймит шкулне халех ĕçре тĕрĕсленнĕ, опытлă работниксемпе çирĕплетмеле.

В. Андрейĕв.

Кабардино-Балкар АСС Республикĕнче.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: уйсене шăвармалли системăн пĕви.

Е. Микулин фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Учитĕлсем пулăшрĕç

Комсомолăн Кадеркинăри пуçламĕш организацийĕ пĕр вăхăтра саланса кайнăччĕ. Ку вăл пĕтĕмпех комсомол Çĕмĕрле райкомĕ пулăшманран килнĕ.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕн йала çĕнĕ учитĕлсем—Коçтăковпа Лоçĕв йулташсем килчĕç. Вĕсем ĕçлеме пуçласанах виçĕ çынран комсомол пуçламĕш организацийĕ туса, унăн ĕçне лайăхлатасшăн кунран кун тăрăшрĕç. Халь комсомолĕцсен йышĕ 11 çынна çитрĕ.

Комсомол пуçламĕш организацин ĕçĕ пĕрмайах лайăхланса пырать.

И. Данилăв.

Республикăри пичетĕн пайанхи задачисем

Партин Чăваш организацин тĕп задачисене облăçри XIX-мĕш конференцин решенийĕсенче тĕплĕн кăтартса панă. Партин чи çивĕч, чи вăйлă хĕçпăшалĕ пулса тăракан пирĕн пичетĕн партконференцин решенисене пурнăçа кĕртес ĕçре активлă ĕçлемеле.

Облăçри, районри тата савăтри хаçатсен парторганизацисене куллен пулăшса пымала. Парторганизацисем конференци решенине мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине хаçатсен куллен çутатса тăмала. Хаçатсен социалисăм строитĕлствин тĕрлĕ участкинче ĕçлекен коммунисене мĕн тумалине, мĕнле ĕçлемеллине вĕрентмеле, пулăшмала.

Чи малтан партин чылай райкомĕсемпе парткомсем хаçатсем çине парти комитечĕпе нимĕн те çыхăнса тăман учреждени çине пăхнă пек тĕрĕс мар пăхнине пĕтерес пулать. Парти комитечĕсем хăйсен хаçачĕсем çине çителĕксĕр пăхнипе пула ĕнтĕ Çĕмĕрле, Çĕрпӳ, Шăхасан тата ытти районсенчи хаçат редакцийĕсем çав тери чухăн тата культурăсăр пурăнаççĕ. Редакцисем çине çакнашкал ответсăр пăхассине пĕтерме тахçанах вăхăт çитнĕ.

Пирĕн партин çулпуçĕсем Ленинпа Сталин пичете йаланах питĕ пысăк вырăна хунă. Вĕсем хаçатсене хăйсем йертсе пынă. Мĕншĕн тесен, пичет урлă пирĕн партин массăна куллен калаçать, вĕсене социалисăмлă воспитани парать, революцилĕ кĕрешӳ искусствине вĕрентет.

Хаçата хак памасăр тăма йурамасть. Хаçата парти комитечĕсен контроль туса тăмала, вĕсен йертсе пымала. Хаçата йертсе пырасси парти комитечĕн пĕрремĕш çекретарĕн ĕçĕ пулса тăрать. Кунтан та ытларах, Обком работникĕсен, райком çекретарĕсемпе, инструктăрĕсен, парторгсемпе пропагандиссен тата пур коммуниссен те хаçат ĕçне активлăн хутшăнса ĕçлемеле.

Ленин хаçат ĕçне литератăр мар работниксене активлăн хутшăнса ĕçлеме чĕннĕ. Вăл пирĕн хаçатсене парти руководитĕлĕсем, литератăр мар çынсем ытларах çырса тăрсан, кашни литератăр пуçне пилĕкçĕр тата пилĕк пин литератăр мар работниксем пулсан çеç пирĕн хаçатсем чĕрĕ, интереслă пулаççĕ, тесе каланă.

Хаçатсем çине хăйсен корреспонденчĕсем çеç çырса тултараççĕ пулсан, ку вăл пирĕн хаçатсем массăран уйăрăлнине пĕлтерет. Ку тĕлĕшпе „Правда" хаçат „Красная Чувашия" хаçата тĕрĕс кăтартса пачĕ.

Пирĕн хаçатсенчи кашни сăмах политикăлă çивĕч, халăх ĕçĕшĕн усăллă пулмала. Çакăншăн тăрăшмала парти комитечĕсемпе хаçат редакцийĕсен.

Партилĕ хаçатăн задачи парти комитечĕн авторитетне тата унăн рольне хăпартасси пулать. Парти комитечĕн авторитетне Хĕрлĕ Чутай районĕнчи хаçат пек райком çекретарне мухтанипе мар, хаçатпа райком хушшинчи çыхăнăва çирĕплетсе, пĕр-пĕринпе килĕшсе ĕçленипе хăпартмала. Парти комитечĕсем туса иртерекен ĕçсем çинчен пирĕн хаçатсем тата редактăрсем нимĕн шарламасăр, хаçатра çырмасăр иртсе кайма пултараймаççĕ. Анчах та ку тĕлĕшпе „Красная Чувашия" тата „Чăваш Коммунĕ" хаçатсем те час-часах Обком туса иртерекен ĕçсем çинчен нимĕн те çырмаççĕ. Сăмахран, ПСК(б)П Обкомĕ çак вăхăтра государствăна çĕрулми тăратас плана тултарасси—тĕп задачăсенчен пĕри тесе шутлать. Çакна пурнăçа кĕртме парти активне мобилизацилет. „Чăваш Коммунĕ" çакăн çинчен сахал çырчĕ, „Красная Чувашия" сводкă пичетлесе кăларнипех лăпланса ларать. Парти Обкомĕ политикăлă ытти задачăсемпе пĕрле, Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçула хăвăрт туса пĕтерес задачăна кăларса тăратать. Хаçатсем чукунçул строитĕлстви çинчен хутран-ситрен çеç асăнса илеççĕ. Пирĕн облăçри хаçатсен тепĕр пысăк çитменлĕхĕ çинчен каламала. Вăл—пирĕн хаçатсем пурнăçран йулни пулать. „Красная Чувашия" тата „Чăваш Коммунĕ" хаçатсем октăбĕрĕн 29-мĕшĕнче ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарни çинчен икшер страницă панă. Тепĕр кунне комсомол çинчен пĕр сăмах та, савăнăçлă ларусем çинчен те нимĕн те çырман. Тепĕр пример. „Чăваш Коммунĕ" профактив канашлăвĕ çинчен информаци панипе пĕрлех, профсойузсен ĕçĕсем çинчен умстатйа панă. „Красная Чувашия" хаçат çак канашлу çинчен материал çырма та „ĕлкĕреймен". Пирĕн хаçатсен пурнăçран кайа йулмала мар. Республикăра пулса иртекен ĕçсем çинчен вăхăтра çырса пĕлтермеле.

Пирĕн час-часах çапла пулать: çитес вăхăтра парти райкомĕ хăй умне пĕр задачă, редакци—тепĕр задачă кăларса тăратать. Кунта Ишлей районĕнчи примера илсе кăтартсан та çитĕ. Парти райкомĕ октăбĕрĕн малтанхи çуруйăхĕнче ытти задачăсемпе пĕрлех, ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йединоличниксен лашисем çине налог хурасси çинчен йышăннă саккуна пурнăçа кĕртес ыйтăва çивĕччĕн лартать. Хаçат çакăн çинчен нимĕн те çырмасть. Хаçат умстатйа та çырмасть, умстатйа вырăнне заметкăсем çеç вырнаçтарать.

Çакнашкал йурăхсăр ĕçсем пирĕн редактăрсем райкомпа тачă çыхăнман пирки пулаççĕ. Хаçат редактăрĕ райком членĕ мар пулсан та, райкомăн ларăвĕсенче йаланах пулмала.

Хаçатсен пирĕн партин пурнăçĕпе ĕçĕсене çутатассине организацилемеле. Хаçатра парти пурнăçне çутатасси пысăк та ответлă ĕç. Хаçатри материалсем пирĕн парти пурнăçĕ çинчен йатшăн çырнăскерсем мар пулмала. Вĕсем пирĕн партин ĕçне малашне лайăхлатма, коммуниссене воспитани пама, парторганизацисене хăйсен йăнăшĕсемпе çитменлĕхĕсем çинче вĕрентме пулăшмала.

Хаçатри кашни заметкă, статйа витĕмлĕ пулмала. Редакцисен хаçатра тухнă материалсем ĕçе кĕнине тĕрĕслессине организацилес пулать. Кашни çыру çине тимлĕн пăхмала, мĕншĕн тесен кашни çыру хыçĕнче чĕрĕ çын тăрать. Парти тата халăх пирĕн пичет çине пысăк шанăç хураççĕ. Калапăр, ĕççынни хăйĕн жалăбипе пĕтĕм тивĕçлĕ учреждинсемпе организацисем тăрăх çӳрепĕ хыççăн ĕç тухмасан, йулашкинчен хаçат редакцине йарса хăйне пулăшма ыйтать. Хаçатăн авторитечĕ ĕççынисен çырăвĕсем çине тимлĕн пăхнипе, ĕççынисен ыйтăвĕсене пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшнипе тата ытларах ӳсет.

Хăшпĕр редактăрсем: райкомсемпе райĕçтăвкомсем хаçатăн авторитетне ӳстермеççĕ, теççĕ. Вăрмар районĕнчи „Хĕрлĕ йалав" хаçат авторитечĕ çинчен калама питĕ йăвăр. Çак хаçат редакцийĕ 1938 çулти йанвар уйăхĕнче йанă çырусем районти организацисенче 50 ытла йăваланса выртаççĕ. Çакăн пекех Тутаркас районĕнчи „Еç йалавĕ" хаçат та хаçат тӳлевлĕ çырусене 250 çыру çунтарса йама ĕлкĕрнĕ те. Вĕсем сăлтав тупнă: „çырусенĕ тӳлесе илме редакцин укçа çук".

Хаçат работникĕсен хаçат ĕçне çĕнĕ авторсене хутшăнтарма, вĕсене активлă корреспондентсем пулма пур майсемпе те пулăшма пĕлмеле. Редакци сотрудникĕсем хăйсем заметка йе статйа çырассе те автăра алпусма çеç параççĕ. Çĕнĕ авторсене çапла мар пулăшмала. Авторпа калаçмала. Заметкăра çитменлĕхсем пулсан, ăна тӳрлетме. йусама пулăшас пулать. Кунта Ленин авторсене мĕнле пулăшнинчен, вĕсемшĕн мĕнле тăрăшнинчен вĕренмеле.

Парти пурнăçĕн ыйтăвĕсене тĕрĕс çутатасси хаçатри ытти ниçте пысăк вырăнта тăрать. Халĕ пирĕн парторганизаци çĕнĕ çынсемпе, Ленин—Сталин ĕçĕнĕн пĕтĕм вăй-халне парса ĕçлекен çынсемпе ӳсет. Вĕсемпе кашнинне уйрăмăн ĕçлемелĕ, вĕсене воспитани памала, пăр, ...

Пирĕн парторганизаци халăх тăшманĕсене пĕтерес тĕлĕшпе пысăк ĕç туса иртерчĕ. Анчах та тăшмансене малашне те пĕтерсе пырас задачă кун йĕркинчен тухса ӳкмест. Фашисăмăн троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла бандисене тăпăлтарса пĕтерессе хаçатсен хисеплĕ задачисенчен пĕри пулать. Обкомăн кивĕ руководстви тăшмансене хирĕç кĕрешессине йури чарса лартнă. Пирĕн халĕ çакăнтан урок тумала.

Çĕнĕрен ĕçе лартнă кадрсене тимлĕн пулăшмала. Вĕсен нумайĕшĕн çителĕклĕ таран опыт çукха. Хаçатсен лайăх ĕçлекен работниксен паха опычĕсене кăтартса, çамрăк работниксене вĕренме пулăшмала. Паллах, хăйсен опыт çителĕксĕр пирки вĕсем йăнăш та тума пултараççĕ, хаçатсен работниксене йăнăш тăвассинчен малтанах асăрхаттарма пĕлмеле. Тăшмансем çĕнĕ кадрсене варалама, вĕсене хурлама тăрăшнине хирĕç çине тăрса кĕрешмеле.

Пичет урлă марксисăм-ленинисăм пропагандине сарасси пысăк та ответлă ĕç. Хаçатсен кашни коммуниста, интеллигента пирĕн партин пуйан историне тĕплĕн вĕренме, тĕплĕн ăнланма пулăшмала. Çитес кĕске вăхăтрах „ПСК(б) Парти историн Кĕске курсĕ" уйрăм кĕнекейĕ чăвашла пичетленсе тухать. Хаçатсен кашни коммуниста, кашни комсомолĕца, ПСК(б)П историне вĕренме тăрăшакан кашни çынна халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ хăй активлăн хутшăнса ĕçленипе çырнă учебник тăрăх парти историне вĕренме пулăшмала.

С. Карташов.

Çĕрулми хатĕрлевĕ

Плана уйăхччен тултармалах

Партипе правительствă çĕрулми хатĕрлес плана çанталăк сивĕтиччен тултарсă, çĕрулмине хĕл касарма лайăх пуçтарса хума вырăнсенчи организацисене çирĕппĕн хушрĕç. Анчах вырăнсенчи организацисем ку ĕçре татăклă улшăну туни çук-ха. Парти организацийĕсем хатĕрлев организацисене оперативлăн йертсе пырас вырăнне, ытларах шавласа вăхăта иртереççĕ. Кайа йулса пыракан йалсоветсене пулăшма йанă работниксем çĕрулми хатĕрлев планне халех тултарассишĕн мĕнле ĕçсем туса пынине тĕрĕслесе тăмаççĕ.

Нойабĕрĕн 2-мĕшне пирĕн республикă çĕрулми хатĕрлев планне 50 процент ытларах çеç тултарнă. Йулашки кунсенче уйрăм районсенче çĕрулми хатĕрлевĕн хăвăртлăхĕ иртнĕ уйăхринчен темиçе хут чакнă. Акă, Пăрачкав районĕн плана хăвăрт тултарма куллен 325 тоннă çĕрулми хатĕрлемеле пулсан, нойабĕрĕн 1-мĕшĕнче пурĕ те 9 тоннă çеç хатĕрленĕ. Çавăн пекех, Вăрмар районĕ те куллен 50 тоннă çĕрулми хатĕрлес вырăнне, йулашки кунсенче 9—10 тоннă çеç хатĕрлет. Окťабĕрĕн 31-мĕшĕнче Йĕпреç райкомĕн çекретарĕ Михайлăв йулташ çĕрулми хатĕрлев планне нойабĕрĕн 1-мĕшне тултарса çитеретпĕр, тесе парти обкомне ĕнентернĕ. Хаљ мĕн куранаť? Михайлăв йулташ хăйĕн сăмахĕне хăй хуçа мар. Нойабĕрĕн 2-мĕшне Йĕпреç районĕ плана 44 процент ытларах çеç тултарнă. Ĕнерхи кун районра пĕр центнĕр те çĕрулми хатĕрлемен.

Çĕрулми хатĕрлев планне çитес сывăх кунсенчех тултарассишĕн Уполнаркомзаг аппаратĕнчи работниксем хăйсем те татăклăн кĕрешмеççĕ. Акă, Пăрачкав районĕнче Крўчков йулташ, Елĕкре Çмирнов йулташ, Йĕпреçре—Маçтерăв, Куславккара—Андрийанăв йулташсем вуншар кун пурăнаççĕ пулин те çав районсем çуплах йулса пыраççĕ.

Нойабĕрĕн 1-мĕшĕнче республикĕпе 8.100 тоннă çĕрулми хатĕрлесе куллен хатĕрлемели плана 62,3 процент çеç тултарнă. Хатĕрленĕ çĕрулмине Мускава 6.025 тоннă тийесе йарса пĕр кунхи плана 46,4 процент çеç пурнăça кĕртнĕ. Вакунсем паманнипе 2.075 тоннă çĕрулми тийемесĕр йулнă.

Сăмахран ĕçе куçма вăхăт. Çитет шавлама. Плана тултарассишĕн ытларах ĕçлемеле. Вырăнсенче политикăлă массăлă ĕçе анлăн туса пырса çĕрулми хатĕрлев планне уйăхччен тултармалах.

—о—

Парса татнă

ИШЛЕЙ. Ворошилăв йачĕпе тăракан колхоз государствă умĕнчи пур обйазательствăсене те тултарнă. Пайанхи куна çĕрулми хатĕрлев планне колхоз çеç мар, колхозниксен хуçалăхĕсем те тултарнă.

Окťабĕрĕн 29-мĕшĕнче колхозниксен пухăвĕнче колхоз председателĕ А. Михайлăв йулташ пирĕн колхоз Окťабĕр уйавне мĕнле çитĕнўсем тунипе кĕтсе илни çинчен доклад туса пачĕ. Çав пухурах 11 хуçалăха колхоза илчĕç.

Н. Никифăрăв.

—о—

Кĕрешĕве вăйлатмала

ÇĔНТĔРВĂРРи. Районра çĕрулми хатĕрлев планне тултарассишĕн кĕрешў начар пыраť. Иртнĕ пилĕккунлăхра ку йенĕпе ним улшăну та туман. Çĕрулми хатĕрлев планне 46 процент тултарнипех лăпланса ларнă. Пайанхи куна чылай колхозсемпе йалсем çĕрулми пама тытăнман та. Окťабĕрĕн 27-мĕш тĕлне районĕпе те 12 колхоз çеç çĕрулми парса татнă.

Г. Гиндейĕв.

—о—

Ĕç йапăх пыраť

КУСЛАВККА. (Хамăр корр., телефон тăрăх). Районĕпе кăçал государствăна 19.751 центнĕр çĕрулми памала. Çак вăхăта 6.377 центнĕр парса, плана 32,1 процент çеç тултарнă.

Малта пыракан Катĕркассинчи колхоз 100 процент, Комаровкăри колхоз 80 процент тултарнă. Толбайри, Паланкассинчи, Улмалуйĕнчи, Анатри Выçăлкăри колхозсем пĕр килограм та паман. Йединоличниксем çĕрулми тăратас тĕлĕшпе пит те начар ĕçлеççĕ,—плана 2,8 процент çеç тултарнă.

Çавнашкалах районра Мускава çĕрулми йарас плана та тултарман. Планпа 400 тоннă йамала пулнă пулсан, окťабĕрĕн 28-мĕшне 235 тоннă çеç тийесе йанă.

Мраљка.

★ ★

Çĕнĕ магазинсемпе ларйоксем

1938 çулти çенťабĕрĕн 1-мĕш тĕлне Чăваш республикĕнче потребкооперацин магазинсемпе ларйоксем мĕн пурĕ 1.080 пулнă.

Виççĕмĕшпе тăваттăмĕш кварталсенче 142 магазинпа ларйок уçма палăртнă. Вĕсенчен 26 уçнă. Окťабĕр уйавĕ тĕлне Патăрйел районĕнче Кивĕ Туçара. Вăрнар районĕнче Кољцовкăра, Шупашкар районĕнче Тĕкĕшре, Тулик Хураскинче тата Тăвайра магазинсем уçаççĕ.

1939 çулта çĕнĕ магазинсемпе ларйоксем 126 уçма палăртнă.

Пољшă тытса илнĕ районсенче лару-тăру çивĕчленсе пыраť

Пољшă телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, окťабĕрĕн 26-мĕш тĕлне Пољшă влаçĕсем Тешин Силезинчен 1500 ытла чехсен çемйисене кăларса йанă. Пољшăпа Чехословаки чиккисенче пур çĕрте те мирлĕ халăхсемпе хирĕçўлĕ ĕçсем пулса иртеççĕ. Çав провокацилĕ ĕçсене пĕтĕмпех Пољшă диверсанчĕсем туса пыраççĕ. Хаçатсем Тешин Силезинче пољаксем йышăннă районсене Чехословакине кайала таврăрса партарассишĕн пыракан йухăм вăйлăн ўссе пыни çинчен уççăнах çыраççĕ. Акă, сăмахран, Порембе йатлă вырăнта вăрттăн листовкăсем нумай сарнă, вăл листовкăсенче халăха плебисцит туса иртерме ыйтма хушнă, çав плебисцит Фриштат уйесĕ кама пулмали çинчен тăракан ыйтăва татса памала тенĕ. Новый Богуминре, Пољшă тытса илнĕ вырăнта, чехсемпе нимĕç шкулĕсене хупнине тата çутта кăларас ĕçе пĕтĕмпех Пољшă чĕлхипе туса пымала тунине протеслесе халăхсем демонстраци организациленĕ.

Пољшă çарĕсем йышăннă территори сывăхĕнчи Моравскри Остравра Пољшăна хирĕçле пысăк демонстраци пулса иртнĕ. Унта пурăнакан темиçе пин çын алă пусса Чехословаки правительстви патне деклараци йанă, вăл декларацире Фриштат уйесне халех Чехословакине кайала таврăрса пама ыйтнă.

Тешин Селизинче лару-тăру çав тери çивĕчленсе пынă май, Пољшă правительстви вăл районсене хĕçпăшалланнă полицин пысăк вăйне илсе пынă.

(ТАСС).

Германин Америкăри шпионла центрĕ пирки пыракан процес

Ңйу-Йоркра Германин Америкăри Пĕрлешўлĕ Штатсĕнчи шпионла центрĕн процесĕ малалах пыраť. Окťабĕрĕн 31-мĕшĕнче суд Мартин Шаде кăтартса панисене итленĕ. Шаде Германи шпионĕсемпе Шљутерпа тата Гофманпа çыхăну тытса тăнă пулнă.

Шаде çапла каланă: Германин Америкăри Пĕрлешўлĕ Штатсенчи шпионла центрĕн агĕнчĕсем Совет Сойузĕн Ңйу-Йоркри консуљствине хĕсĕнсе кĕме хăтланнă, тенĕ. Суд çакна палăртаť: Германин Америкăри Пĕрлешўлĕ Штатсĕнчи шпионла центрĕ Америкăна хирĕçле ĕçсем çеç мар тунă, вĕсем тата Совет Сойузне хирĕçле ĕçсем те туса пынă.

Айăпланакансене малала допрос тăваççĕ.

(ТАСС).

—о—

Чехословакине уйăрса пайлас пирки канашлаççĕ

БЕРЛИН, нойабĕрĕн 1-мĕшĕ. Окťабĕрĕн 31-мĕшĕнче Геринг Венăна пырса çитнĕ. Унпа пĕрле тата Нейрат, Браухичпа Миљх генералсем, аслă командованин чылай представителĕсем пынă.

Германи, Итали, Чехословаки тата Венгри йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен нойабĕрĕн 2-мĕшĕнче Венгри Чехословаки умне тăратнă требованисем пирки канашлу пулмала. Геринг Венăна пыни çав канашлупа çыхăнса тăраť пулмала.

(ТАСС).

В. С. Гризодубăвă йулташа пĕрремĕш класлă пилот йатне панă

Авиаци техникине вĕренсе алла илес ĕçре пысăк çитĕнўсем тунăшăн тата Мускав—Инçет Хĕвелтухăç вĕçевĕнче рекорд тунăшăн Граждански сывлăш флочĕн тĕп тытăмĕ Валентинă Степанăвнă Гризодубăвă йулташа Граждански сывлăш флочĕн пĕрремĕш класлă пилот йатне памала тунă тата ăна „Отличник аэрофлота" значок парса наградăланă.

„Отличник аэрофлота" значокне парса, çавăн пекех тата, А. Й. Овечкин, А. И. Романăв, Н. В. Бурлаков, Н. Е. Сахăрăв, Н. М. Деркунский, борт-механик К. Т. Домкин, борт-радис В. А. Быстров йулташсене наградăланă. Вĕсем пурте „Родина" самољотпа унăн екипажне шыраса тупас ĕçре правительствă заданине лайăх пурнăçланă.

(ТАСС).

—о—

Колхозсенчи политкунсем

Орджоникидзе крайĕнчи Ворошиловски райком колхозсенче уйăхра икĕ хут политкунсем туса иртерет. Политкунсене чи лайăх пропагандиссем йертсе пыраççĕ.

Йулашки кунсенче: „Хасан кўлли патĕнчи ĕçсем", „Чехословакири ĕçсем", „Испани халăхĕ интервентсене хирĕç кĕрешни", „Йапони агреççийĕ Китайра" т. ыт. темăсем тăрăх 90 доклад ытла тунă.

Политкунсем питĕ активлă иртеççĕ. Нумай колхозниксем малтанах ыйтусем хатĕрлесе хураççĕ, пухусенче тухса калаççĕ. Çитес калаçу мĕн çинчен пулассине колхозниксене 5 кун малтан пĕлтерсе хураççĕ.

(ТАСС).

„Мосфильм" студийĕ „Ленин" фильм ўкерет.

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: сылтăмри-республикăн тава тивĕçлĕ артисĕ В. Ванин Кремљ комендантĕн ролĕнче, сулахайри — артис Шатăв англи разведчикĕн ролĕнче.

С. Лоскутов тата Л. Великжанин фото ўкерчĕкĕ („Пресклише").

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн

УКАЗĔ

Чăваш АСС Республикĕнчи Йĕпреç районĕнчи халăх пурăнакан пункта Йĕпреçе рабочи поçолăксен категорине кĕртесси çинчен

Йĕпреç районĕнчи халăх пурăнакан пункта Йĕпреçе, унăн йатне малтанхи пекех хăварса, рабочи поçолăксен категорине кĕртесси çинчен Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ 1938 çулти çенťабĕрĕн 4-мĕшĕнче йышăннă постановленине çирĕплетес.

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн
Предçедателĕ—**А. БАДАЙЕВ.**

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн
Çекретарĕ **Г. КОЗЛОВ.**

Мускав, Кремљ.
1938 çулти окťабĕрĕн 26-мĕш.

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн

УКАЗĔ

Чăваш АСС Республикĕнчи Вăрнар районĕнчи халăх пурăнакан пункта Вăрнара рабочи поçолăксен категорине кĕртесси çинчен

Вăрнар районĕнчи халăх пурăнакан пункта Вăрнара, унăн йатне малтанхи пекех хăварса, рабочи поçолăксен категорине кĕртесси çинчен Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ 1938 çулти çенťабĕрĕн 4-мĕшĕнче йышăннă постановленине çирĕплетес.

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн
Предçедателĕ—**А. БАДАЙЕВ.**

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн
Çекретарĕ—**Г. КОЗЛОВ.**

Мускав, Кремљ.
1938 çулти окťабĕрĕн 26-мĕш.

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн

УКАЗЕ

Чăваш АСС Республикĕнчи Куславкка районĕнчи халăх пурăнакан пункта Куславккана рабочи поçолăксен категорине кĕртесси çинчен

Куславкка районĕнчи халăх пурăнакан пункта Куславккана, унăн йатне малтанхи пекех хăварса, рабочи поçолăксен категорине кĕртесси çинчен Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ 1938 çулти çенťабĕрĕн 4-мĕшĕнче йышăннă постановленине çирĕплетес.

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн
Предçедателĕ—**А. БАДАЙЕВ.**

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн
Çекретарĕ—**Г. КОЗЛОВ.**

Мускав, Кремљ.
1938 çулти окťабĕрĕн 26-мĕш.

Поет биографийĕ

Нумай пулмасť Гослитиздат Майаковский çырнисен XIII томне пичетлесе кăларнă. Ку тома поетăн автобиографийĕ, унăн пурнăçĕпе ĕçĕсен паллă вăхăчĕсем тата халиччен хăçан та пичетре пулман хăш-пĕр сăввисем те кĕнĕ. Çавăн пекех ку томра поет çырнисенчен малтанхи томсенче мĕнле произведенисем пичетленнине кăтартакан библиографилĕ тата алфавитла кăтартса панă уйрăмсем те пур.

Поета хăйне: „Сирĕн биографи ытлашши интереснах мар, пуйан тĕслĕхсемлех мар", тесе ўпкеленĕ нумайĕшĕ. Майаковский вĕсене хирĕç çапла ответленĕ: „Епĕ академиленсех кайман-ха, хампала кииленме хăнăхман, тĕрĕсрех каласан, кирĕк-мĕнле ĕçпе те, вăл ĕç савăнăçлă пулсассăн çеç интересленетĕп. Нумай тĕслĕ литературăсен ўсĕмĕсем тата ўкĕмĕсем, çимволиссем, реалиссем т. ыт. те, епĕр вĕсемпе кĕрешни—çавсем пурте манăн куç умĕнче пулса пынăскерсем: çавсем вĕсем пирĕн питех те интереснă та пуйан историйĕн пĕр пайĕ пулса тăраççĕ. Ун çинчен çырма кирлĕ. Çыратăп та".

Унăн çак ĕмĕтлĕ шухăшĕсем пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕреймен. Çапах та вăл хăй çинчен çырса хăварнă хăш-пĕр татăк-кĕсĕксем, кĕске пулĕçин те, чăнлăхпа тата тулли савăнăçлăхпа тулса тăраканскерсем, вулакансене поетăн кунçулĕпе паллашас ĕçре нумай усă параççĕ, поетăн творчествинчи чăнлăхпа унăн пурнăçĕнчи чăнлăх хушшинчи пĕрлĕхе уçăмлăн туйса илме пулăшаççĕ.

„Епĕ—поет. Чи малтанах çавă интереснă. Çавăн çинчен çыратăп та ĕнтĕ. Ытти ĕçсем çинчен те, вăл ĕçсем хамăн сăмахсенчен уйрăлса тăмаççĕ пулсан, çыратăп". Çапла пуçлаť хăйĕн автобиографине Владимир Майаковский. Унăн пĕтĕм творчестви—сăвăсем, поемăсем, агитплакатсем, пйесăсем, фейерсем пурте вĕсем хăйĕн сăмахĕсенчен уйăрăлса тăман поетăн пысăк пурнăçĕ. Пур çĕрте те йаланах вăл хăйпе пĕрле пулнă. Пур поет сассисен хушшинче унăн—Майаковскин хăватлă сассине пĕр йăнăшмасăрах уйăрса илме май пулнă. Халăхăн шухăшĕпе туйăмлăхне „илемлетекен" çеç мар вăл, халăхăн шухăшĕпе туйăмлăхне каласа паракан, çав шухăшпа туйăмлăха çĕклентерсе хавхалантаракан пулнă. Çапла шухăшланă вăл, çав ĕмĕтлĕ шухăшсемпе хавхаланса пурăннă. Çĕршыва интереслентерекен кирек мĕнле темă та Майаковскин хăйин теми пулнă. Вăл чĕнмесĕр тăма пултарайман, пур событисем пирки те сăмах тухса каланă. Унăн кашни сăмахĕ мĕлйунлă массăпа çывăх та хаклă сăмах пулнă. Вăл сăмахра массă хăйне шыраса тупнă, вăл сăмахра массă хăйĕн чĕри тапнине туйнă.

Белинскишĕн Пушкин Росçийă, Росçийăри халăх пурнăçĕн чăн представителĕ пулнă.

Çавăн пекех пулнă Майаковский. Ун чунĕн тĕнчи вăл пирĕн тĕнче. Епĕр ăна пур çĕрте те хăй йуратнă тусне калана йăлăнула сăмахсенче те, тўпемийĕх телейлĕхпе тулнă строфасенче те уçăмлăн куратпăр.

Ултавпа витĕнсе поезине кĕрсе кайнă, хăш-пĕр çапкаланчăксем, çутçăварсем, рвачсем Майаковскине намăссăрлансах „епĕлĕхшĕн" тата „мăнкăмăллăхшăн" айăплама хăтланнă. Майаковский калама йуратнă „Епĕ" сăмахăн тĕп чăнлăхĕ мĕнтен килнĕ иккенне вăхăт тĕрĕссĕн кăтартрĕ.

Вулăр ак,
ăмсанăрах
еп—
Совет Сойузĕн
гражданинĕ!

Çак сăмахсене ĕнтĕ халăх суйланă депутат Образцов ССРС Верховнăй Совет Çеççийĕн çўлĕ трибунĕ çине тухса каларĕ, çак сăмахсемпе вăл совет потриочĕсен мухтавĕпе хисепне уççăнрах кăтартса парасшăн пулчĕ.

„Государствă—вăл епĕ",—теççĕ çĕршывăн хуçисем, çĕршывăн строителĕсем тата часовойĕсем иккенне туйса илнĕ мĕлйунлă совет çынисем.

Пролетарии
приходят к коммунизму
низом—
низом шахт,
серпов
и вил,—
я ж
с небес поэзии
бросаюсь в коммунизм
потому что
нет мне
без него любви,—

тесе хăй çинчен çырнă Майаковский.

Поези унăн пурнăçăн ĕçĕ, поези унăн кĕрешўри хĕçпăшал пулнă. Поези—унăн шухăшĕ, вĕри чун-хавалĕ, ирĕклĕхĕ, унăн хавасăхĕ, шанчăкĕ. Вăл çырнисем пĕтĕмпех хăйĕн пурнăçĕнчен илнĕ тĕслĕхсем, хăйне тивĕç, хăйпе çыхăнса тăраççĕ вĕсем.

Майаковский 12 çулта. „1905-мĕш çул. Вĕренес вăхăт мар-ха кунта... Револуци маншăн ак мĕнле пуçланчĕ: манăн Исидр йатлă йулташ, пуп патĕнче повар пулса ĕçлекенскер, Алиханăв генерала вĕлернĕ тенĕ хыпара илтсен савăннипе çара уранах вĕри плита çине пуснă. Генерал Алиханăв. Грузири йĕркесĕрлĕхсене „йĕркелесе килĕшў кўрекен". Вилнĕ. Демонстрацисем тата митингсем пулма пуçларĕç. Вĕсенче епĕ те пулатăп Аван..." Çак сăмахсене вулатпăр та епĕр кайрах поет сăвăласа каланисене аса илетпĕр:

... а я
ежедневно
и наново
опять вспоминаю
все синяки
от плеток
всех Алихановых.

„906-мĕш çул... Атте ўтне шăтăка кайса чикнĕ хыççăн—пирĕн çуртра 3 тенкĕ укçа йулнă... Апат начар çийетпĕр. Пенçи—уйăха 10 тенкĕ. Епĕ тата хамăн икĕ йăмăк вĕренетпĕр... Çемйере укçа çук. Çунтарма тата сăрлама тĕлкилчĕ". Епĕр вăл калана сăмахсен чăн хакне пĕлетпĕр:

Я
жирных
с детства привык ненавидеть,
всегда себя
за обед продавая.

Гимназире тăваттăмĕш класра вĕреннĕ чухне Майаковский Енгĕљс çырнă „Акти-Дюринг" кĕнекепе паллашаť. Ленинăн „Две тактики" йатлă брошўрине те тупса вулаť. Маркс çырнисене те хавхалансах вулаť вăл. „Маркспăн "Предисловие" пек кăмăла кайакан произведени искусствăра çук",—тесе паллă тăваť Майаковский ача чух. Шкулта вăрттăн тухса тăракан „Порыв" йатлă пĕчĕкçĕ журналра хăйĕн чи малтанхи сăввине çырса кăлараť.

1908 çул. Вăл, вунпилĕк çулхи ача, РСДРП (бољшевиксен) парти ретне кĕрет. Булочниксен, сапожниксен, наборщиксен хушшинче пропагандă ĕçĕпе ĕçлет. Малтанхи арĕст. „Çемйере пурăнма" тесе кăлараççĕ, çав вăхăтрах ăна сыхласа пурăнма полицине хушаççĕ. Унтан иккĕмĕш арĕст, виççĕмĕш арĕст. 11 уйăх хушши тĕрмере лараť Майаковский.

Унăн „Владимир Илйич Ленин" йатлă поемине аса илер:

Пролетариат—
неуклюже и узко
тому,
кому
коммунизм—западня.
Для нас
это слово—
могущая
мертвых
сражаться поднять.

Малала тата:

Мозг класса,
дело класса,
сила класса,
слава класса—
вот что такое партия!

Майаковскишĕн çак вывăд вăл таçтан айакран илнĕ тĕслĕхсемпе шухăшласа тунă вывăд пулман. „Манăн револуци",—тет вăл социалиçăмлă Аслă револуцине хăйĕн автобиографийĕнче. Çав револуцишĕн вăл тĕрĕс тăнă, ăна чун-чĕререн парăннă. Револуцин „пуљăсемпе шăтăкланнă йалавне" хăйĕн ийхăçан „никам патĕнче тарçăра пулман" сăввисемпе, таса ĕçĕпе, чунĕпе-йунĕпе мухтанă.

Майаковскин литературăлă автобиографийĕ „1928 çул" тесе паллă тунипе вĕçленет. Унăн ку вăхăтри йулашки пысăк произведенисенчен пĕри „Хорошо" поемă пулнă. Поет ăна „программăлă гаčла" тесе шутланă. Йанăшман вăл, нимĕн чухлĕ те ўстермесĕр каланă. Ку поемăра вăл хăйне шыраса тупнă, çĕнĕ вăйпа вăл хăйĕн курăнăвĕпе туйăмлăхĕн тĕнчине уçнă.

Я видел
места,
где инжир с айвой
росли
без труда
у рта моего,—
к таким относишься
иначе.
Но землю,
которую
завоевал
и полуживую
выняньчил,
где с пулей встань,
с винтовкой ложись,
где каплей
льешся с массами,—
с такою
землею
пойдешь
на жизнь,
на труд,
на праздник
и на смерть!

Çапла поетăн биографийĕ. Поези—çавă çеç унăн тулли пурнăçне тытса тăнă. Анчах поези уншăн пирĕн тăван çĕршыв пулнă, тăван çĕршывăн ăраскалĕ, халăх ĕçĕн çĕнтерўлĕ уйавĕ пулса тăнă. Çавăнпа та ĕнтĕ вăл пысăк поет, чăнлăхăн, çамрăксен туйăмлăхĕн поечĕ, пĕтĕм тапхăрти чи лайăх, талантлă поет пулма пултарнă.

Майаковский совет поезине йертсе пыраканĕ пулнă, малашне те çаплах йулаť. Малала, Майаковскипе пĕрле!—çак лозунг вăл поезири пирĕн çамрăксемшĕн йанăраса тăракан лозунг пулмала.

С. Трегуб.

Ответлă редактăр **Н. М. ÇЕМЕНĂВ.**

„ЧĂВАШ КОММУНĔ" ÇЫРĂНСА ИЛМЕЛИ ХАКСЕМ: ПĔР УЙĂХА 2 Т. 50 ПУС. 3 УЙĂХА 7 Т. 50 П. 6 УЙĂХА 15 Т. ÇУЛТАЛĂКА 30 ТЕНКĔ. ПОДПИСКĂНА ÇЫХĂНУ УЙРĂМĔСЕМ, ПИÇМОНОÇЕЦСЕМ ЙЫШĂНАÇÇĔ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 617 Гор. Чебоксары, типография № 1 Мест прома ЧАССР, заказ № 832, ф. 6. 58 × 84 п. л.